Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 НОЙАБĔР 4
ЕРНЕКУН
255(5068) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр [illegible] 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 6. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйсен — 8—23.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ Октябĕрти Социалисăмлă Аслă Революци 21 çул тултарнă тĕле панă

ЛОЗУНГСЕМ

1. Сывă пултăр ССР Союзĕнчи Октябĕрти Социалисăмлă Аслă Революци 21 çул тултарни!

2. Клас йенĕ тăрăх тăвансене, капитал тĕрминче асапланакансене, фашисăмăн йунлă террор асапне тÿсекенсене, рабочи клас пĕтĕм тĕнчипе çĕнтересси-шĕн кĕрешекен борецсене—пирĕнтен тăванла салам!

3. Пĕтĕм çĕршывсенчи пролетарисем! Колонисенчи пусмăрта пурăнакан халăхсем! Ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешÿ йалавне çÿлерех çĕклĕр! Тĕп пултăр капиталисăм! Тĕп пултăр нацилĕ чуралăх! Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери пролетарилĕ революци!

4. Фашисăм—вăл капиталиссемпе помешчиксен рабочисене, хресченсене тата ĕç интеллигенцине хирĕçле терророла политики. Фашисăм—вăл йут çĕрсене туртса илессишĕн пыракан вăрçă. Фашисăм—тĕнчери халăхсен ирĕклĕхĕн тата никама пăхăнмасăр пурăнассин чи хайар тăшманĕ. Фашисăма хирĕç кĕрешме пĕтĕм вăйсене мобилизацилер!

5. Мĕнпур çĕршывсенчи рабочисем, работницăсем, хресченсем тата ĕççыннисем! Фашисăма тата вăрçа хирĕç кĕрешекен халăх фронтне сарса анлăлатăр тата çирĕплетĕр! Миршĕн, демократилĕ ирĕклĕхсемшĕн, социалисăмшăн!

6. Испани халăхĕн шалти тата йут çĕршывсенчи фашисăма хирĕç пыракан кĕрешĕвĕ—малта пыракан тата малала туртăнакан пĕтĕм етемлĕхĕн ĕçĕ. Хăй никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн тата ирĕклĕхшĕн кĕрешекен паттăр Испани халăхне салам!

7. Хăй никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен аслă Китай халăхне тăванла салам!

8. ССР Союзĕнчи рабочи класпа капиталисăмлă çĕршывсенчи рабочи клас хушшинчи интернационаллă çыхăнусене çирĕплетер! Пĕтĕм тĕнчери пролетарилĕ солидарнăç йалавне çÿлерех çĕклер!

9. „Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртекенсем çапни çине çапнипех ответ пама хатĕр тăратпăр" (СТАЛИН).

10. Сывă пултăр пирĕн тăван, никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар, ССР Союзĕнчи халăхсен мирлĕ ĕçĕн хăватлă тĕрекĕ, Октябĕрти Социалисăмлă Аслă Революци çĕнтерсе илнисен шанчăклă хуралçи!

11. Сывă пултăр ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕ—хамăр тăван çĕршывăн тинĕс чиккисен шанчăклă хуралçи!

12. Сывă пулччăр совет лётчикĕсем, пирĕн тăван çĕршывăн мухтавлă соколĕсем!

13. Геройньă-лётчицăсене, социалисăмлă тăван çĕршывăн хăйулă хĕрĕсене—çулăмлă салам!

14. Хăйулă та шиксĕр бойец-пограничниксене, социалисăм çĕршывĕн çивĕч куçлă часовойĕсене салам!

15. Хĕрлĕ йалавлă пĕрремĕш Уйрăм çарăн мухтавлă бойецĕсене, командирĕсемпе политработникĕсене—совет Приморйине хÿтлекенсене паттăрла салам!

16. Тăван çĕршыва сыхласси—ССР Союзĕн кашни гражданинĕн чи таса тивĕçĕ!

17. Сывă пултăр рабочисемпе хресченсен союзĕ—совет власĕн никĕсĕ!

18. Патша Российĕ халăхсен тĕрми пулнă. Совет çĕршывĕнче пĕртан правалă халăхсен аслă союзĕ ÿссе тĕрекленет. Сывă пултăр ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла союзĕ тата аслă туслăхĕ!

19. Большевикла парти йертсе пынипе хамăр тăван çĕршывăн ирĕклĕхне, вăл никама пăхăнса тăмасăр пурăнассине кĕрешсе илнĕ совет халăхĕн моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхĕ сывă пултăр!

20. ССР Союзĕн Сталинла Конституцийĕ—Октябĕрти Социалисăмлă Революци кĕрешĕвĕпе çĕнтерĕвĕсен итогĕ. Социалисăм çĕнтерĕвĕн тата рабочисемпе хресченсен демократин Конституцийĕ сывă пултăр!

21. Промышленнăçпа транспăртри ударниксемпе ударницăсен нумай мĕлйунлă çарне, стахановĕцсемпе стахановкăсене—пирĕн çĕршывăн йатлă çыннисене—большевикла салам!

22. Йăвăр индустрипе машиностройенири рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Кăмрăк, нефть, металл нумай кăларассишĕн, çĕршыври халăх хуçалăхĕн аталанăвĕн никĕсĕ пулса тăракан чи лайăх машинăсене вăхăтра туса кăларассишĕн!

23. Оборонă промышленнăçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хамăр тăван çĕршывăн оборонă хăватне тĕреклетĕр! Тăван Хĕрлĕ Çара чи çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарăр!

24. Çăмăл промышленнăçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Совет çĕршывĕн гражданĕсене ситцă, пурçăн, сукна, трикотаж, урана тăхăнмалисем нумайрах парăр! Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешĕр!

25. Советăн государствăлă суту-илĕвĕпе кооперативлă суту-илÿ работникĕсем! Совет потребителне мĕн кирлине лайăхрах парса тăрассишĕн, хулари тата йалти культурăлă совет суту-илĕвĕшĕн!

26. Совет учрежденисенчи служащисем! Государствă дисциплинине çирĕплетессишĕн, совет саккунĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырассишĕн кĕрешĕр, ĕççыннисен ыйтăвĕсене, вĕсене мĕн кирлине кăтартулăн пурнăçа кĕртсе пырассине туса çитерĕр!

27. Социалисăмлă уйхир ĕçĕнчи пысăк тухăçла тырпулшăн большевикла кĕрешекен стахановĕцсене—салам! Сывă пултăр колхозсемпе колхозниксен пуйан та культурăлă пурнăçĕ!

28. ССР Союзне тĕнчере чи малта пыракан промышленнăçлă тата техникăлă, чи пысăк тухăçлă йалхуçалăхлĕ çĕршыв туса хурар! Продуктăсем тулăх пулмала тăвар!

29. Рабочи класăн культурăлă-техникăлă виçине инженерлă-техниклă ĕç работникĕсен виçипе танлашиччен хăпартар!

30. Сывă пултăр пирĕн совет интеллигенцийĕ, халăх интеллигенцийĕ! Совет интеллигенцине политикăлă воспитани тата большевикла пиçĕхÿ парас ĕç çине ытларах çавăрăнса пăхар!

31. ССР Союзĕнчи халăхсен культури малала татах чечекленессишĕн, совет наукин, техникин тата искусствин çĕнĕ çитĕнĕвĕсемшĕн!

32. Пирĕн малта пыракан, халăх ĕçне тума хатĕр тăракан, кивелнĕ традицисене çĕмĕрсе малала хăйулăн пыракан наукăна чечеклентерессишĕн!

33. Рабочисемпе служащисемшĕн куллен-кун тăрăшасси, профсойузсен членĕсен массисене большевикла воспитани парса пырасси,—совет профсойуз организацийĕсен хисеплĕ задачи! Сывă пулччăр совет профсойузĕсем—коммунисăм шкулĕ!

34. Государствă управленине, хамăр çĕршыври хуçалăх тата культурă ĕçĕсене активлăн хутшăнакан ССР Союзĕнчи пĕртан правалă хĕрарăм сывă пултăр!

35. Хамăр кадрсен идеологилĕ виçине тата политикăлă çирĕплĕхне хăпартассишĕн, большевисăма вĕренсе алла илессишĕн!

36. Революцилĕ сыхăлăха вăйлатар! Хамăр хушăри политикăлă тимсĕрлĕхе пĕтерер!

37. Халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла шпионсемпе сăтăрçăсене, йут çĕршывсенчи разведкăсене тара кĕрешнĕскерсене тĕппипех пĕтерер! Тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнакансене—вилĕм!

38. Совет разведки—совет халăхĕн тăшманшăн хăрушă хĕçпăшалĕ, социалисăмлă революцин вичкĕн хуралĕ ÿстĕр те çирĕплентĕр!

39. Сывă пултăр комсомол—большевикла партин хăватлă резервĕ тата шанчăклă помошникĕ! Сывă пулччăр пирĕн çĕршыври ĕççамрăкĕсем!

40. Пионерсемпе пионеркăсем! Совет шкулĕнче вĕренекенсем! Пĕлÿсем илсе пырăр, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешекенсем пулма, социалисăмлă тăван çĕршыва сыхлакансем пулма вĕренĕр!

41. Хамăр çитменлĕхсене хирĕç критикăпа самокритикăна анлăрах сарса йарар! Рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государствин организацилĕхĕпе хăватне тата ытларах çирĕплетер!

42. Сывă пултăр та çирĕплентĕр пирĕн хăватлă Тăван çĕршыв—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕ!

43. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партийĕ—ССР Союзĕнчи ĕççыннисен малти отрйачĕ!

44. Сывă пултăр Коммунисла Интернационал—вăрçа, фашисăма тата капиталисăма хирĕç пыракан кĕрешÿ руководителĕ тата организатăрĕ! Сывă пултăр коммунисăм!

45. Сывă пултăр Марксăн—Енгельсăн—Ленинăн—Сталинăн никам çĕнейми аслă йалавĕ! Сывă пултăр ленинисăм!

Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ.

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

„Родина" самолёт екипажне наградăласси çинчен

Мускав—Инçет-Хĕвелтухăç маршрутпа нисса анса лармасăр инçете каймалли геройла вĕçеве пурнăçа кĕртнĕшĕн, инçете тÿрĕ вĕçес йенĕпе хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери рекордне тунăшăн тата çак ĕçре калама çук хăйулă та чăтăмлă пулнăшăн

1. Ленин Орденĕ парса Совет Союз Геройĕ йатне парас:

Валентина Степанăвна Гризодубăвана—„Родина" самолёт екипажĕн командирне,

Полина Денисăвна Осипенкона—„Родина" самолётăн иккĕмĕш пилотне,

Марина Михайлăвна Раскована—„Родина" самолёт штурманне.

2. Вĕçевре пулнисене—В. С. Гризодубăва, П. Д. Осипенко, М. М. Раскова йулташсене пĕр вăхăтлăх 25 пин тенкĕшер укçан парса наградăлас.

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулти нойабĕрĕн 2-мĕш.

„Родина" самолёт вĕçевĕн организатăрĕсене наградăлани

Вĕçеве организацилес йенĕпе кăтартулă ĕçленĕшĕн тата „Родина" самолётăн материальнăй чăсне лайăх хатĕрленĕшĕн ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ 1938 çулти нойабĕрĕн 2-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх:

„Хĕрлĕ Çăлтăр" орденĕ парса Управлени начальникне — Оборонă промышленнăç Халăх Комиссариачĕн вĕçев уполномоченнăйне С. И. Бельайкин йулташа;

„Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав" орденĕ парса—„Родина" тата „СССР-25" самолётсен конструктăрне—П. О. Сухой йулташа тата

„Знак Почета" орденĕ парса 10 çынна наградăланă. «Знак Почета» орденĕсем панисем хушшинче: 156 номĕрлĕ завод директăрĕ М. А. Усачов, вĕçев штабĕн начальникĕ Д. И. Антонăв, вĕçев штаб начальникĕн заместителĕ И. О. Хорецкий т. ыт.

Указра асăннă йулташсене пурне те хăйсен икĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ укçан парса наградăлаççĕ.

(ТАСС).

„Родина" самолёт екипажне шыраса тупса илсе тухас ĕçре пулнисене наградăлани

„Родина" самолёт екипажне шыраса тупса илсе тухас ĕçре паттăр та чаплă ĕçсем тунăшăн ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ 1938 çулти нойабĕрĕн 2-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, лётчиксене, парашютиссене, организатăрсене ССРС орденĕсем тата ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ Грамăтисем парса наградăламала тунă.

„Хĕрлĕ çăлтăр" орденĕ парса: Гражданла Сывлăш флот лётчикĕсене—М. Е. Сахарăв, Н. В. Бурлаков, А. Й. Овечкин, капитан-парашютис Н. А. Полежайĕв, аслă лейтенант-парашютис М. А. Йеремен, иккĕмĕш рангри çар врачĕ-парашютис П. С. Тихăнăв, лейтенант-парашютис А. И. Ольанишин, аслă лейтенант-лётчик А. К. Катулин, вĕçеве организациленĕ правительствă комиссиĕ членĕ М. Ф. Картушов йулташсене наградăланă.

„Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав" орденĕ парса ПСК(б)П Комсомольск хула комитет секретарне — В. П. Пегов йулташа тата линейнăй монтăра—Н. М. Макçимăв йулташа наградăланă.

„Знак Почета" орденĕ парса 24 çынна, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ Грамăтине парса 23 çынна наградăланă.

Указра асăннă йулташсене пурне те хăйсен икĕ уйăхлăх ĕçукçи чухлĕ укçан парса наградăлаççĕ.

(ТАСС).

Çĕрулми хатĕрлевĕ

Республикăшăн чыслă ĕç

Нойабĕрĕн 3-мĕш тĕлне пирĕн республикă 1938 çулшăн государствăна çĕрулми тăратмали плана мĕн пурĕ те 51,5 процент çеç тултарнă. Районсем çак ĕçре тивĕçлĕ улшăнусем туни палăрмасть. Ку йенĕпе уйрăмăнах, Патăрйел, Йĕпреç, Куславкка, Çĕрпÿ, Пăрачкав районĕсем йулса пыраççĕ.

Патăрйел районĕнчи „Хĕрлĕ Туçа" колхоз (председателĕ орденоносĕц Острйаков йулташ) государствăна çĕрулми тăратас плана 100 процентчĕпех тултарнă. Çав вăхăтрах районри чылай йалсоветсем çак ĕçре пысăк чăрмавсем кÿрсе пыраççĕ. Йалсоветсенчи актива тивĕçлипе организацилемен. Йалсовет тата колхоз председателĕсем хăйсем те государствăна тăратмали çĕрулмине вăхăтра леçсе памаççĕ. Алманчă йалсовечĕ (председателĕ Карзаков) плана 9 процент çеç. Татмăш йалсовечĕ 2 процент çеç тултарнă.

Йĕпреç районĕнче те ĕçсем начар. Чăваш-Тимĕш йалсовет председателĕ Михайлăв, „Большевик" колхоз председателĕ Йегорăв йулташсем хăйсем те пĕр килограм çĕрулми тăратман. Çав районрах Шăртан йолсовечĕ 1938 çулшăн государствăна çĕрулми тăратас плана 28 процент çеç тултарнă.

Çавăн пекех, Çĕрпÿ районĕнчи Чурачăк йалсовет председателĕн Курапаткинăн госуварствăна 1,2 центнĕр çĕрулми тăратмала пулнă. Вăл пĕр килограм та тăратман. Курапаткин тата „Броневик" колхоз председателĕ Филиппăв „пирĕн çĕрулми çук, пулсан та вĕтĕ", тесе ĕçре чăрмантарса пыраççĕ. Тĕплĕн тĕрĕслесе пăхнă хыççăн çĕрулми аванни, вăл государствăна тăратма йурăхлă пулни палăрнă.

Районри тата йалсовет активĕ 1938 çулшăн государствăна çрулми тăратас плана тултарас ĕçре хăйсене тивекен ответлăха туйса ĕçлемеççĕ. Акă, тĕслĕхрен октябĕрĕн 21-мĕшĕнче Куславкка районĕнчи активран 31 çын йалсене йанă пулнă. Çав çынсем йалсовечĕсене пысăк та ответлă ĕçе пурнăçласа çĕрте пулăшас вырăнне ик-виç кунтанах кайала таврăннă та, вырăнта ĕç мĕнле пыни тата хăйсем мĕнле ĕçсем туни çинчен никама та отчот паман. Райсобес Смирнов тата Райсойузăн хатĕрлев конторĕнче ĕçлекен Петров йулташсем ним тумасăрах йалтан таврăннă.

Мускава тăратма çĕрулми хатĕрлес плана нойабĕрĕн 2-мĕш тĕлне 64,2 процент тултарнă. Мĕн пурĕ республикĕпе 8344 тоннă хатĕрленĕ. Вăл шутран 6.474 тоннă тийесе асатнă. Ку йенĕпе те кулленхи ĕç хăвăртлăхĕ чаксa пыни палăрать. Октябĕрĕн 31-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче республикĕпе 529 тоннă çĕрулми хатĕрленĕ пулсан, нойабĕрĕн 2-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче 244 тоннă кăна хатĕрленĕ.

Октябĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту хулара та йалта та вăйлăн саралса кайрĕ. Вăл ăмăрту халăха çĕнĕ çĕнтерÿсем тума çĕклерĕ. Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва йалсенче татах та вăйлăн сарса пырса, халăхăн çĕкленĕвĕпе усă курса уйава государствăна çĕрулми тăратмалли çăсалхи плана йалтах тултарнипе кĕтсе илмеле. Ăна туни аслă уйава çĕнĕ парне пани пулать.

—О—

1938 çулшăн государствăна çĕрулми тăратмали плана мĕнле тултарнине кăтартакан СВОДКĂ

(Нойабĕрĕн 3-мĕшне, процентпа)

Улатăр	66,9
Елĕк	83,9
Патăрйел	38,9
Вăрнар	71,5
Йĕпреç	46,4
Ишлей	55,0
Канаш	35,5
Куславкка	44,7
Хĕрлĕ Чутай	32,6
Кувакинă	24,6
Сĕнтĕрвăрри	55,2
Пăрачкав	21,7
Турхан	56,3
Тутаркас	89,0
Трак	51,8
Вăрмар	31,1
Çĕрпÿ	40,6
Шупашкар	62,0
Шăмăршă	30,5
Шăхасан	70,9
Шăнкăртам	78,3
Çĕмĕрле	57,3
Йетĕрне	59,3
Йелчĕк	53,9
Тăвай	67,0
Республикĕпе	51,5

Çĕрулми планне халех тултарар

ПАТĂРЙЕЛ. Государствăна çĕрулми парас плана тултарасси хальхи вăхăтра чи ответлă ĕç пулса тăрать. Анчах ку ĕç районра ытла та йапăх тăрать-ха, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕн агентĕсем начар ĕçленипе октябĕрĕн 31-мĕшне государствăна çĕрулми тăратас плана 25,05 проц. çеç тултарнă. Вăл шутран колхозсем 51 8 процент, колхозниксем 32,5 процент, йединоличниксем 12,4 процент панă.

„Хунав", „Динамо", „Ленинская победа" тата Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозсем государствăна çĕрулмине срукченех парса татрĕç. Çав вăхăтрах „Комбайн", „Первомайск", Крупскайа, Розă Люксембург, Чапайĕв тата Ленин йачĕсемпе тăракан колхозсем пĕр килограм та паман.

Татмăшри „Восток" колхозра 90 центнĕр парас вырăнне 14,93 центнĕр çеç панă. Ку ĕçре Царйов йулташ йертсе пыракан 4-мĕш бригадă уйрăмăнах кайа йулса пырать. Вăл пурĕ те 2,70 центнĕр çеç панă. Колхозниксем виçĕ центнĕр леçнĕ. Ку колхозра „пирĕн кăçал улма начар пулнă," тесе льгота парасса кĕтсе лараççĕ.

Хăшпĕр йалсоветсенчи йединоличниксем государствăна çĕрулми парассинчен пăрăнса тăраççĕ, плана срукра тултарассишĕн пачах тăрăшмаççĕ. Алманчă йалсоветне кĕрекен йединоличниксем 250 центнĕр парас вырăнне 6,20 центнĕр, Сăкăтри йединоличниксем 764 центнĕр вырăнне 9,75 центнĕр, Хирти Сĕнтĕрти йединоличниксем 228 центнĕр вырăнне 6,21 центнĕр çеç панă.

Йалсовет председателĕ Çеменăв йулташ йединоличниксем хушшинче çĕрулмине государствăна вăхăтра парса татас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

Калас пулать, ку ĕçре Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕн агентĕсем те питĕ йапăх ĕçлеççĕ, йалсоветсемпе колхозсенче час-часах пулмаççĕ. Порфирйĕв йулташ хăйĕн участкинче 3895,12 цент. парас вырăнне 588,68 центнĕр парса плана 15,01 процент анчах пурнăçа кĕртнĕ.

Çавнашкалах Тибайкин йулташ участкинче те 3528,77 центнĕр парас вырăнне 756,98 центнĕр парса плана 21,4 процент çеç тултарнă. Вăл хăйĕн участкинчи колхозсемпе йалсоветсенче час-часах пулмасть, ĕçсĕр çÿрет.

Н. К-в.

Тыră сутăн илессине ăнăçлăн иртерер

Партипе правительствă йышăннă тăрăх, пирĕн республикăра потребкооперацине колхозсенчен, колхозниксенчен тата йединоличниксен тыră сутăн илме ирĕк панă. Хуçалăхпа политикăлă çак пысăк задачăна потребкооперации çисsucceed теминчи пĕтĕм работниксене, тыră сутăн илес тĕлĕшпе ĕçлекенсене ĕçе хастарлăн хутшăнтарнипе çеç пурнăçа кĕртме пулать. Йалпосем çумĕнче йалхуçалăх продуктисене илес тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăм аппаратсăр пуçне, кашни колхозрах кооператив активĕсем пулмала. Вĕсем тыră сутăн илессине ăнăçлăн иртерме пулăшаççĕ.

Тыră сутăн илес ыйту тавра колхозсенче тата колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче массăлă ăнлантару ĕçне туса пымала. Хăйсен ытлашши тыррине сутакан колхозсемпе колхозниксене йалхуçалăхĕнче кирлĕ тĕрлĕ таварсене сутас ĕçе йĕркелемеле.

Республикăри районсенче кăçал ытлашши тыră пурри, колхозниксен тупăшĕ ÿссе пыни—партипе правительствă потребкооперации умне лартнă задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртме май парассĕ.

Хальхи вăхăтра потребкооперации умĕнче тыră сутăн илес ĕçе большевикла тытăнас задачă тăрать. Кооперацине колхозсем хушшинче колхозсенчен ытлашши тырăна сутăн илес тĕлĕшпе хуçалăх договĕрсем тумала. Çавăн пекех колхозниксен ушкăнĕсемпе вĕсенчен ытлашши тырăна сутăн илес тĕлĕшпе договăрсем тумала.

Договăр тăрăх колхозсемпе колхозниксенчен сутăн илнĕ тырăна колхозсен заготзерно пунктне организацилĕн илсе пымала. Çав вăхăтрах кашни йалпарах колхозниксемпе йединоличниксенчен тыră илме складсем пулмала. Складсене тасатса хатĕрлемеле, дезинфекци тумала.

Колхозсенчен, колхозниксенчен тата йединоличниксенчен ытлашши тырăна сутăн илесси вăл—политикăлă пысăк ĕç. Районсенчи партипе совет организацисен потребкооперацине çак ĕçре пулăшса пымала.

Й. Йегорăв.

Йутçĕршывсен хăнисем ССР Союзне Октябĕр праçникне килеççĕ

ЛЕНИНГРД, нойабĕрĕн 1-мĕш. Лондăнран Ленинграда килме „Сибирь" пăрахут тухнă. Рăл пăрахут çинче йут çĕршывсен делегацийĕ Совет Союзне Октябĕрти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнине уйавлама килет.

„Сибирь" пăрахут нойабĕрĕн 4-мĕшĕнче Ленинграда çитет.

(ТАСС).

Пĕтĕм Союзри 5-мĕш химилĕ ăмăрту декабĕрĕн 1-мĕшĕнче пулать

Азербайджан, Армйан тата Грузи Осоавиахим организацийĕсем ыйтнипе Пĕтĕм Союзри 5-мĕш химилĕ ăмăртăва 1938 çулти декабĕрĕн 1-мĕшĕнче иртермеле тунă.

Çавăн пирки районсенчи ăмăртусем кăçалхи нойабĕрĕн 15-мĕшĕнчен пулса иртмеле.

(ТАСС).

Тата лайăхрах ĕçлемеле

Шĕмшешри вăтам шкулта (Елĕк р.) комсомол организацин отчотпа суйлав пухăвĕ октябĕрĕн 23-мĕшĕнче пулса иртрĕ.

Комсомол организацийĕ ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлана вăхăтра питĕ активлă ĕçленĕ. Комсомолĕцсем суйлавçăсем хушшинче 10—15-шер калаçу туса иртернĕ. Вăл вăхăтра шавлă оркестр тата кружоксем аван ĕçлесе пынă. 18 çамрăка комсомол ретне илнĕ. Шкулти пионер организацине аван йертсе пынă: сборсем, вечĕрсем косторсем вăхăтра туса ирттернĕ.

Çав вăхăтрах организацин çитменлĕхсем те пулнă. Комсомол хуçалăхĕ йĕркелĕ мар. Комсорг Н. Иванов комсомол билетне çухатнă пулнă, ун çинчен вăл пуçламĕш организацине те, райкомола та каламан. Пионер вожатăйсенчен отчотсем илмен.

Отчот тăрăх 8 комсомолĕц тухса каларĕç, çитес вăхăтра мĕнле ĕçлемелли çинчен сĕнÿсем пачĕç.

Т. Андрейĕв.

ИСТОРИЙӖ

ПСК(б)П Тӗпкомӗн Комиҫҫийӗ редакциленӗ. КӖСКЕ КУРС. ПСК(б)П Тӗпкомӗ ырланӑ. 1938 ҫ.

VII-мӗш сыпӑкӑн малалли

3. Боԓшевиксен партин столицӑри ӑнӑҫӑвӗсем. Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ ҫарӗсен фронтри ӑнӑҫсӑр наступленийӗ. Рабочисемпе салтаксен ийуԓри демонстрацине пусарни.

Парти Апрелри конференцин решенийӗсем тӑрӑх массӑсене кӗрешсе илме, вӗсене кӗрешӳ воспитанине пама тата организацилеме пит пысӑк ӗҫ сарса йанӑ. Парти линийӗ ҫав тапхӑрта—боԓшевиксен политикине чӑтӑмлӑн ӑнлантарса парса тата меԣшевиксемпе есерсен соглашательле политикине тӑрӑ шыв ҫине кӑларса, ҫав партисене массӑсенчен уйӑрса хурасси, Советсенче ытларахӑше кӗрешсе илесси пулнӑ.

Советсенче ӗҫленисӗр пуҫне боԓшевиксем профсойузсенче, хапрӑк-савӑт комитечӗсенче пит пысӑк ӗҫсем туса пынӑ.

Боԓшевиксем ҫарта уйрӑмах пысӑк ӗҫсем туса пынӑ. Пур ҫӗрте те ҫар организацийӗсене тӑва-тӑва хунӑ. Боԓшевиксем фронтсенче тата тылра салтаксемпе матроссене организацилес тӗлӗшпе ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫленӗ. Салтаксене револԓуцилентерес ӗҫре боԓшевиксен фронтра тухакан хаҫачӗ „Окопная правда" уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑннӑ.

Боԓшевиксен ҫав пропагандӑпа агитацилӗ ӗҫне пула револԓуцин пирвайхи уйӑхӗсенчех ӗнтӗ нумай хуласенче рабочисем Советсене, уйрӑмах районрисене, ҫӗнӗрен суйланӑ, меԣшевиксемпе есерсене кӑларса ҫапса, вӗсен вырӑнне боԓшевиксен партийӗ майлӑ тӑракансене суйланӑ.

Боԓшевиксен ӗҫӗ, уйрӑмах Петроградра, пит ырӑ резуԓтатсем панӑ.

1917 ҫулти майӑн 30-мӗшӗпе ийунӗн 3-мӗшӗ хушшинче Петроградри хапрӑк-савӑт комитечӗсен конференцийӗ пулса иртнӗ. Вӑл конференцире ӗнтӗ делегатсен тӑватӑ пайӗнчен виҫӗ пайӗ боԓшевиксем хыҫҫӑн пынӑ. Петроградри пролетариат пӗтӗмӗшпех боԓшевиксен „Пӗтӗм влаҫ Советсене!" текен лозунгӗ хыҫҫӑн пынӑ.

1917 ҫулти ийунӗн 3 (16)-мӗшӗнче Пӗтӗм Российӑри Советсен I-мӗш сйесӗ пухӑннӑ. Боԓшевиксем Советсенче сахаллӑхра пулнӑ-ха,—сйесра вӗсен, 700—800 ҫын меԣшевиксемпе есерсене тата ыттисене хирӗҫ, 100 ҫынтан ытларах ҫеҫ делегатсем пулнӑ.

Боԓшевиксем Советсен I-мӗш сйесӗнче буржуазипе килӗштерес политикӑ пӗтсе ларасси патне илсе пынине ҫине тӑрсах тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ, вӑрҫӑн империалисӑмлӑ характерне уҫса палӑртнӑ. Ленин сйесра сӑмах тухса каланӑ, вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче боԓшевиксен линийӗ тӗрӗссине кӑтартса панӑ, Советсен влаҫӗ ҫеҫ ӗҫҫыннисене ҫӑкӑр, хресченсене ҫӗр пама, мир тума, ҫӗршыва ишӗлӳрен кӑларма пултарат̆, тенӗ.

Ҫав вӑхӑтра Петроградӑн рабочи районӗсенче демонстраци организацилессишӗн тата Советсен сйесӗ умне требованисем тӑратассишӗн массӑлӑ кампани пынӑ. Рабочисем хӑйсен ирӗкӗпе демонстраци туни ан пултӑр тесе тата массӑсен револԓуцилӗ настроенийӗпе хӑйӗн тӗллевӗпе усӑ курма шутласа, Петроград Совечӗн Ӗҫтӑвкомӗ Петроградра демонстраци ийунӗн 18-мӗшӗнче (ийулӗн 1-мӗшӗнче) тума решени йышӑннӑ. Меԣшевиксемпе есерсем демонстраци боԓшевиксене хирӗҫле лозунгсемпе иртет, тесе шухӑшланӑ. Боԓшевиксен партийӗ ҫав демонстрацине вӑйлӑн хатӗрленме тытӑннӑ. Сталин йулташ унчухне „Правда"-ра „...пирӗн задачӑ—Петроградри ийунӗн 18-мӗшӗнчи демонстраци пирӗн револԓуцилӗ лозунгсемпе иртмеле тӑвасси пулат̆", тесе ҫырнӑ.

1917 ҫулти ийунӗн 18-мӗшӗнче револԓуцишӗн ҫапӑҫса вилнисен масарӗ патӗнче иртнӗ демонстраци чӑннипех боԓшевиксен партин вӑйӗсен смотрӗ пулса тӑнӑ. Вӑл массӑсен револԓуцилӗхӗ ӳссе пынине тата вӗсем боԓшевиксен партине шанни ӳссе пынине кӑтартса панӑ. Меԣшевиксемпе есерсен Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑна шанасси, вӑрҫӑна малала туса пыма кирли ҫинчен калакан лозунгӗсем боԓшевиксен лозунгӗсен пит пысӑк масси хушшинче тӗпех путса ларнӑ. 400 пин демонстрантсем: „Тӗп пултӑр вӑрҫӑ!", „Тӗп пулччӑр вунӑ министр-капиталиссем!", „Пӗтӗм влаҫ Советсене!"—текен лозунгсемлӗ йалавсемпе иртсе пынӑ.

Ку вӑл меԣшевиксемпе есерсем пӗтӗмпех пӑчланни, Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ столицӑра пӑчланни пулнӑ.

Ҫапах та, Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ, Советсен I-мӗш сйесӗ хута кӗнӗ май, империалисӑмлӑ политикӑна малала тытса пыма йышӑннӑ. Шӑпах ийунӗн 18-мӗш кунӗнче Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ, Англи-Франци империалисӗсен ирӗкне пурнӑҫа кӗртсе, фронтра салтаксене наступленине хӑваласа кайнӑ. Ҫав наступленире буржуази револԓуцине пӗтерсе хумали пӗртен-пӗр май курнӑ. Наступлени ӑнӑҫлӑ пулас пулсан, буржуази пӗтӗм влаҫа хӑйӗн аллине илме, Советсене хӗссе кӑларма тата боԓшевиксене таптаса тӑкма шанса тӑнӑ. Наступлени ӑнӑҫлӑ пулмасан, пӗтӗм айӑпа ҫав боԓшевиксем ҫинех, вӗсем ҫара пӑсса йачӗҫ, тесе айӑпласа, йӑвантармала пулнӑ.

Наступлени пӑчланасси пирки иккӗленмели пулман. Вӑл ӗнтӗ чӑнах та пӑчланнӑ. Салтаксем ывӑнни, вӗсем наступленин тӗллевне ӑнланманни, салтаксем хӑйсене йут командӑй состава шанманни, снарйадсем тата артиллери ҫителӗклӗ пулманни,—ҫаксем пурте фронтра наступлени пӑчланмала туса хунӑ.

Фронтри наступлени ҫинчен, унтан наступлени пӑчланни ҫинчен илнӗ хыпар столицӑна хускатса ҫӗкленӗ. Рабочисемпе салтаксем вӗҫӗ-хӗррисӗр тарӑхса кайнӑ. Ҫапла пулса тухнӑ: мир политики ҫинчен каласа, Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ халӑха улталанӑ. Ҫапла пулса тухнӑ: Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ империалисӑмлӑ вӑрҫӑна малала *туса пырассишӗн тӑрат̆*. Ҫапла *пулса тухнӑ*: Советсен Пӗтӗм Российӑ Тӗпӗҫтӑвкомӗ тата Петроград Совечӗ Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑн преступленилӗ ӗҫӗсене хирӗҫ тӑрасшӑн пулман йе хирӗҫ тӑма пултарайман, вара вӗсем хӑйсем Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ хыҫҫӑн хӳрере ҫапкаланса пынӑ.

Петроградри рабочисемпе салтаксен револԓуцилӗ тарӑхӑвӗ тулса тӑкӑнса тӑнӑ. Ийулӗн 3 (16)-мӗшӗнче Петроградра, Выборгски районра, демонстрацисем стихийлӑн пуҫланса кайнӑ. Вӗсем кунҫипех пулса пынӑ. Уйрӑм демонстрацисенчен пӗтӗмӗшлӗ пит пысӑк хӗҫпӑшаллӑ демонстраци пулса кайнӑ, вӑл пӗтӗм влаҫ Советсен аллине куҫмала, текен лозунгпа иртнӗ. Боԓшевиксен партийӗ ҫав самантра хӗҫпӑшаллӑ выступленине хирӗҫ пулнӑ, мӗншӗн тесен вӑл—револԓуцилӗ кризис пулса ҫитменха, ҫар тата провинци столицӑри восстанине пулӑшма хатӗр мар-ха, столицӑра уйрӑмӑн тата вӑхӑт ҫитиччен пулнӑ восстани револԓуци авангардне контрреволԓуци ҫӗмӗрсе тӑкассине ҫӑмӑллатма пултарат̆, тесе шутланӑ. Анчах массӑсене демонстрацине тухасран тытса чарма май ҫукки курӑнсан, парти демонстрацине, ӑна мирлӗ тата организацилӗ характерлӑ туса йарас тесе, хутшӑнма постановлени йышӑннӑ. Боԓшевиксен партийӗ ҫавна тума пултарнӑ, вара ҫӗршерпин демонстрантсем Петроград Совечӗ тата Советсен Пӗтӗм Российӑ Тӗпӗҫтӑвкомӗ патне пынӑ, унта Советсенчен влаҫа хӑйсен аллине илме, империалисӑмлӑ буржуазипе ҫыхӑнассине татса хума тата мирӗн активлӑ политикине тытса пыма ыйтнӑ.

Демонстраци мирлӗ характерлӑ пулнӑ пулин те, демонстрантсене хирӗҫ реакцилӗ чӑҫсене—йункерсен тата офицерсен отрйачӗсене кӑларнӑ. Петроград урамӗсенче рабочисемпе салтаксен йунне пит нумайӑн йухтарнӑ. Рабочисене ҫӗмӗрсе тӑкма фронтран чи тӗттӗм, контрреволԓуцилӗ ҫар чӑҫӗсене чӗнсе илнӗ.

Меԣшевиксемпе есерсем буржуазипе тата шургвардейӗсен генералӗсемпе союзлӑ пулса, рабочисемпе салтаксен демонстрацине пуртарнӑ хыҫҫӑн, боԓшевиксен партийӗ ҫине сиксе ӳкнӗ. „Правда" редакцин помещенине ҫӗмӗрнӗ. „Правда", „Солдатская правда" хаҫатсене, боԓшевиксен тата ытти чылай хаҫачӗсене хупнӑ. Урамра йункерсем Воинӑв рабочине „Листок Правды" сутнӑшӑнах вӗлернӗ. Красногвардейӗцсене хӗҫпӑшалсӑрлантарма тытӑннӑ. Петроград гарнизонӗнчи револԓуцилӗ чӑҫсене столицӑран илсе тухнӑ та фронта йанӑ. Тылра тата фронтсенче те арӗссем туса иртернӗ. Ийулӗн 7-мӗшӗнче Ленина арӗслесси ҫинчен приказ кӑларнӑ. Боԓшевиксен партин пысӑк деятелӗсене чылайӗшне арӗсленӗ. Боԓшевиксен изданисене пичетлесе тӑнӑ „Труд" типографине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Петроградри суд палатин прокурорӗ пӗлтернинчен: Ленина тата ытти чылай боԓшевиксене „государственнӑй изменӑшӑн" тата хӗҫпӑшаллӑ восстани организацилешӗн суд умне тӑратассӗ, тесе каланӑ. Ленина хирӗҫ айӑпламалине Деникин генерал штабӗнче шпионсем тата провокаторсем кӑтартса пани тӑрӑх туса хатӗрленӗ.

Ҫапла вара, коалицилӗ Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ,—унта меԣшевиксемпе есерсен Церетели тата Скобелев, Керенский тата Чернов пек паллӑ представителӗсем кӗнӗ,—уҫҫӑнах империалисӑмӑн тата контрреволԓуцин лачакине кӗрсе ӳкнӗ. Мир политики вырӑнне вӑл вӑрҫӑна малала туса пырас политикӑ тытса пыма тытӑннӑ. Халӑхӑн демократилӗ прависене сыхлас вырӑнне вӑл ҫав правасене пӗтерсе хурас тата рабочисемпе салтаксене хӗҫпӑшал вӑйӗпе тыткалас политикӑ тытса пыма тытӑннӑ.

Буржуази представителӗсем—Гучков тата Миԓуков тума хӑйманнине, „социалиссем"—Керенский тата Церетели, Чернов тата Скобелев тума хӑйнӑ.

Икӗвлаҫлӑх пӗтнӗ.

Буржуазине усӑлӑ пӗтнӗ, мӗншӗн тесен пӗтӗм влаҫ Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ аллине куҫнӑ, Советсем хӑйсен есерла-меԣшевикла руководствипе пӗрле Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑн хушмалчи пулса тӑнӑ.

Револԓуцин мирлӗ тапхӑрӗ пӗтнӗ, мӗншӗн тесен кун йӗркинчи ыйтусене штыкпа татса пама тытӑннӑ.

Обстановкӑ улшӑннине кура боԓшевиксен партийӗ хӑйӗн тактикине улӑштарма йышӑннӑ. Вӑл вӑрттӑнлӑха куҫнӑ, хӑйӗн ҫулпуҫне Ленина вӑрттӑн пурӑнма тӗплӗн пытантарнӑ та буржуази влаҫне хӗҫпӑшал вӑйӗпе сирпӗтсе антарса Совет влаҫӗ туса хума восстанине хатӗрленме тытӑннӑ.

4. Боԓшевиксен партийӗ хӗҫпӑшаллӑ восстани хатӗрлесси патне ҫул тытни. Партин VI-мӗш сйесӗ.

Буржуазин тата вакбуржуазин пичечӗ калама ҫук тулланӑ обстановкӑра *Петроградра боԓшевиксен партин VI-мӗш сйесӗ пухӑннӑ. Вӑл Лондӑнри V-мӗш сйес пулнӑранпа вунӑ ҫул* иртнӗ хыҫҫӑн тата Прагӑра боԓшевиксен конференцийӗ пулнӑранпа пилӗк ҫул иртнӗ хыҫҫӑн пухӑннӑ. Сйес 1917 ҫулти ийулӗн 26-мӗшӗнче пуҫланса августӑн 3-мӗшӗччен пынӑ, вӑл вӑрттӑн пулса иртнӗ. Пичетре сйеса пухни ҫинчен ҫеҫ пӗлтернӗ, сйес пухӑнакан вырӑна кӑтартман. Пирвайхи ларусем Выборг йенче пулса иртнӗ. Йулашки ларусем Нарвскийӗ ворота патӗнчи шкул ҫуртӗнче пулса иртнӗ. Унта хаԓ Кулԓтурӑ ҫурчӗ туса лартнӑ. Буржуалӑ пичет сйесра пулнисене арӗслеме хушнӑ. Сышчиксем сйес ларӑвӗсен вырӑнне урараан ӳкиччченех шыранӑ, анчах ҫапах та вӗсем ӑна тупайман.

Ҫапла патша йӗркине сирпӗтсе антарнӑ хыҫҫӑн пилӗк уйӑх иртсен, боԓшевиксен ирӗксӗрех вӑрттӑн пухӑнмала килнӗ, тата пролетарилӗ парти ҫулпуҫӗн Ленинӑн ҫав вӑхӑтра ирӗксӗрех Разлив станци ҫывӑхӗнче шалашра пытанса пурӑнмала пулнӑ.

Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑн ишчейкисем йӗрленӗ пирки, Ленин сйесра пулма пултарайман, анчах вӑл сйеса вӑрттӑн пурӑннӑ ҫӗртен хӑйӗн Петроградри соратникӗсемпе ученикӗсем: Сталин, Свердлов, Молотӑв, Орджоникидзе урлӑ йертсе пынӑ.

Сйесра ӗҫ тӑвакан сасӑпа 157 *делегат тата канашлакан сасӑпа* 128 *делегат пулнӑ.* Партире вӑл вӑхӑт тӗлне 240 пин ҫынна йахӑн шутланнӑ. Ийулӗн 3-мӗшӗччен, урӑхла каласан, рабочисен демонстрацине ҫӗмӗриччен, боԓшевиксем уҫҫӑн ӗҫленӗ чухне, партин пичет оргӑнӗсем 41 пулнӑ, вӗсенчен вырӑсла чӗлхепе 29 тата ытти чӗлхесемпе 12 пулнӑ.

Ийуԓ кунӗсенче боԓшевиксене, рабочи класа хӗсӗрленисем пирӗн партин влийанине сахаллатман ҫеҫ мар, пачах урӑхла—унӑн влийанине тата та ытларах ӳстернӗ. Вырӑнсенчен килнӗ делегатсем ҫакӑн ҫинчен пит нумай фактсем илсе кӑтартнӑ: рабочисем тата салтаксем масси-массипе меԣшевиксемпе есерсенчен пӑрахса уйӑрӑлса кайма тытӑннӑ, йӗрӗнсе вӗсем ҫинчен „социал-тӳремшчиксем" тесе каланӑ. Рабочисемпе салтаксем, меԣшевиксемпе есерсен партийӗсен членӗсем, хӑйсен член билечӗсене ҫура-ҫура пӑрахнӑ та ылханса вӗсен партийӗсенчен туха-туха кайнӑ, боԓшевиксенчен хӑйсене вӗсен партине илме ыйтнӑ.

Сйесра тӗп ыйтусем Тӗп Комитетӑн политикӑлла отчӗчӗ тата политикӑлла лару-тӑру ҫинчен тӑракан ыйту пулнӑ. Ҫав ыйтусем тӑрӑх туна докладсенче буржуази револԓуцине пусарма темӗн чухлех вӑй хурат̆ пулин те, револԓуци ӳссе, аталанса пынине Сталин йулташ уҫҫӑн та татӑклӑн кӑтартса панӑ. Вӑл ҫакна кӑтартса панӑ: револԓуци продуктсен производствине тата вӗсене валеҫессине рабочисем контроԓ тӑвассине пурнӑҫласси ҫинчен, ҫӗре хресченсене парасси ҫинчен, влаҫа буржуази аллинчен рабочи класпа чухӑн хресченсен аллине парасси ҫинчен ыйту лартат̆. Вӑл каланӑ: револԓуци хӑйӗн характерӗпе—социалисӑмлӑ револԓуци пулса пырат̆.

Ийуԓ кунӗсем хыҫҫӑн ҫӗршывра политикӑлла лару-тӑру хыттӑн улшӑннӑ. Икӗвлаҫлӑх пулман. Советсем,—хӑйсен есерла-меԣшевикла руководствипе,—пӗтӗм влаҫа илесшӗн пулман. Ҫавӑнпа Советсем влаҫсӑрскерсем пулса йулнӑ. Влаҫ буржуалӑ Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ аллинче тытӑнса тӑнӑ,—буржуалӑ Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ вара ҫаплах револԓуцине хӗҫпӑшалсӑрлатса пынӑ, унӑн организацийӗсене ҫӗмӗрнӗ, боԓшевиксен партине ҫӗмӗрнӗ. Револԓуци мирлӗ аталанмали майсем пӗтсе ларнӑ. Пӗр май ҫеҫ йулат̆, тенӗ Сталин йулташ,—влаҫа вӑйпа, Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑна сирпӗтсе антарса илмеле. Анчах влаҫа пролетариат ҫеҫ йалти чухӑнсемпе союзлӑ пулса вӑйпа илме пултарат̆.

Советсем,—вӗсене ҫаплах меԣшевиксем тата есерсем йертсе пынӑ,—буржуази лагерне кайса ӳкнӗ тата ку вӑхӑтри лару-тӑрура Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑна пулӑшакансем ҫеҫ пулма пултарнӑ. „Пӗтӗм влаҫ Советсене" текен лозунга, тесе каланӑ Сталин йулташ, ийуԓ кунӗсем хыҫҫӑн кӑларса тӑратмала мар. Анчах ҫак лозунга вӑхӑтлӑха пӑрахӑҫ туни Советсен влаҫӗшӗн кӗрешессине пӑрахӑҫ тунине пӗртте пӗлтермест. Сӑмах пур Советсем ҫинчен те мар, хаԓхи Советсем ҫинчен ҫеҫ, меԣшевиксем тата есерсем йертсе пыракан Советсем ҫинчен, пырат̆.

„Револԓуцин мирлӗ тапхӑрӗ пӗтрӗ,—тенӗ Сталин йулташ,—мирлӗ мар тапхӑр, тытӑҫусемпе сиктерӳсен тапхӑрӗ ҫитсе килчӗ..." (Протоколы VI с"езда РСДРП(б), стр. 111).

Парти хӗҫпӑшаллӑ восстани патнелле пынӑ.

Сйесра, буржуалӑ влийанине палартса, социалисӑмлӑ револԓуци патне ҫул тытнине хирӗҫ тӑракан ҫынсем тупӑннӑ.

Троцкис Преображенский влаҫа кӗрешсе илесси ҫинчен йышӑннӑ резолԓуцире Хӗвеланӑҫӗнче пролетариат револԓуцийӗ пур чухне ҫеҫ ҫӗршыва социалисӑмлӑ ҫулпа йама пулат̆, тесе кӑтартса хӑварма сӗннӗ.

Ҫав троцкисла сӗнӳве хирӗҫ Сталин йулташ тухса каланӑ.

„Шӑпах Российӑ социалисӑм патне ҫул хывакан ҫӗршыв пуласси,—тенӗ Сталин йулташ,—пулма пултарманскер мар... Йевропа ҫеҫ пире ҫул кӑтартса пама пултарат̆ текен кивелсе кайнӑ шухӑша ывӑтса йарас пулат̆. Догматла марксисӑм тата творчествӑлла марксисӑм пур. Епӗ йулашкин майлӑ тӑратӑп" (Протоколы VI с"езда партии, стр. 233—234).

Бухарин, троцкисла позицисем ҫинче тӑрса, хресченсем оборонӑ тӑвас шухӑш-кӑмӑллӑ, вӗсем буржуазипе блокра тӑрӗҫҫӗ, рабочи клас хыҫҫӑн каймӗҫҫӗ, тенӗ.

Бухарина хирӗҫ тӑрса, Сталин йулташ ҫакна кӑтартса панӑ: хресченсем тӗрлӗрен пулӗҫҫӗ—пуйан хресченсем пур, вӗсем империалисӑмлӑ буржуазине пулӑшӗҫҫӗ, тата чухӑн хресченсем пур, вӗсем рабочи класпа союз шырӗҫҫӗ тата револԓуци ҫӗнтерӗвӗшӗн пыракан кӗрешӳре ӑна пулӑшӗҫҫӗ.

Сйес Преображенскин тата Бухаринӑн тӳрлетӗвӗсене сирсе пӑрахнӑ, Сталин йулташӑн резолԓуци пройектне ҫирӗплетнӗ.

Сйес боԓшевиксен економикӑлла платформине сӳтсе-йавса, ӑна ҫирӗплетнӗ. Унӑн тӗп пункчӗсем: помешчиксен ҫӗрӗсене конфискацилесси тата ҫӗршывра пӗтӗм ҫӗрсене национализацилесси, банксене национализацилесси, шултра промышленнӑҫа национализацилесси, производствӑна тата валеҫессине рабочи контроԓ туса тӑрасси.

Сйес производствӑна рабочи контроԓ тӑвассишӗн кӗрешни мӗнле вырӑн йышӑннине уйрӑмах палӑртса кӑтартса панӑ, вӑл шултра промышленнӑҫа национализацилеме куҫнӑ чухне пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

VI-мӗш сйес хӑйӗн пур решенийӗсенче те Ленинӑн пролетариатпа чи чухӑн хресченчен союзӗ ҫинчен, социалисӑмлӑ револԓуци ҫӗнтермели услови пулса тӑракан союз ҫинчен калакан положенине уйрӑмах вӑйлӑн палӑртса панӑ.

Сйес профсойузсем нейтраԓнӑй пулмала тесе калакан меԣшевикла теорине сивленӗ. Сйес: Российӑри рабочи клас умӗнче тӑракан пысӑк задачӑсене профсойузсем боԓшевиксен партин политикӑлӑ руководствине йышӑнакан кӗрешӳлӗ класлӑ организацисемех пулса йулсан ҫеҫ пурнӑҫа кӗртме пулат̆, тесе кӑтартса панӑ.

Сйес „Ҫамрӑксен союзӗсем ҫинчен" резолԓуци йышӑннӑ, вӗсем ҫав вӑхӑтра час-часах хӑйсем тӗллӗн пуҫлана-пуҫлана кайнӑ. Парти кайарахри вӑхӑтра ӗҫлесе пырса ҫав ҫамрӑк организацисене парти ҫумне, парти резерви туса, ҫирӗплетсе хӑварма пултарнӑ.

Сйесра Ленин суда пырасси ҫинчен тӑракан ыйтӑва сӳтсе-йавнӑ. Камӗнӗв, Рыкӑв, Троцкий тата ыттисем те сйесчен малтанах ӗнтӗ Ленинӑн контрреволԓуционерсен судне пымала, тесе шутланӑ. Сталин йулташ татӑклӑнах Ленин суда пырассине хирӗҫ каланӑ. Вӑл суд—суд мар, вӗлерни ҫеҫ пулат̆ тесе шутласа, VI-мӗш сйес та Ленин суда пырассине хирӗҫ каланӑ. Буржуази пӗр ҫакна ҫеҫ тума тӑрӑшни—Ленин, ӑна хӑйӗн чи хӑрушӑ тӑшманӗ тесе, вӗлерме тӑрӑшни пирки сйес иккӗленмен. Сйес револԓуцилӗ пролетариатӑн ҫулпуҫӗсене буржуалӑ-полицилӗ тулланине хирӗҫ протесленӗ тата Ленин патне салам йанӑ.

VI-мӗш сйес партин ҫӗнӗ уставне йышӑннӑ. Парти уставӗнче партин организацисем пурте **демократилӗ централисӑм** никӗсӗ тӑрӑх йӗркеленмеле, тесе кӑтартса панӑ.

Вӑл ҫакна пӗлтернӗ:

1) партин йертсе пыракан оргӑнӗсене пурне те ҫӳлтен пуҫласа айала ҫитийех суйласа лартмала;

2) парти оргӑнӗсем хӑйсен парти организацийӗсем умӗнче вӑхӑтран вӑхӑтах отчот тытмала;

3) партин ҫирӗп дисциплинине пулмала тата сахалрахӑшӗ ытларахӑшне пӑхӑнмала;

4) партин аслӑ оргӑнӗсен решенийӗсем партин кӗҫӗнрех оргӑнӗсемшӗн тата партин пур членӗсемшӗн те пӗр сӑмахсӑрах обйазательнӑ пулса тӑмала.

Парти уставӗнче ҫапла каланӑ: ҫынсене партине вырӑнсенчи организацисем партин икӗ членӗ рекомендаци пана тӑрӑх тата парти организацин членӗсен пӗрлехи пухӑвӗ ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн илессӗ, тенӗ.

VI-мӗш сйес „межрайонӗцсене" вӗсен лидерӗпе Троцкипе пӗрле партине илнӗ. „Межрайонӗцсем"—Петроградра 1913 ҫултанпа пурӑннӑ, пысӑк мар группӑ, троцкиссемпе меԣшевиксенчен тата боԓшевиксем пулнисен пӗр пайӗнчен, партирен уйӑрӑлса кайнӑскерсенчен, тӑнӑ группӑ пулнӑ. „Межрайонӗцсем" вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче центрисла организаци пулнӑ. Вӗсем боԓшевиксене хирӗҫ кӗрешнӗ, анчах вӗсем меԣшевиксемпе те ҫавӑн пекех нумай тӗлте килӗшмен, ҫапла вара, вӗсем хушӑра чӳхенсе тӑнӑ, центриссем пулнӑ. Партин VI-мӗш сйесӗ вӑхӑтӗнче „межрайонӗцсем": епӗр боԓшевиксемпе пур йенпе те килӗшетпӗр, пире партине илме ыйтатпӑр, тесе пӗлтернӗ. Сйес, вӑхӑт ҫитсен вӗсем чӑн-чӑн боԓшевиксем пулма пултарӗҫҫӗ тесе шутласа, вӗсен ыйтӑвне йышӑннӑ. „Межрайонӗцсенчен" хӑшпӗрисем, сӑмахран, Володарский, Урицкий тата ыттисем те, кайран чӑнах та боԓшевиксем пулса тӑчӗҫ. Троцкипе тата унӑн хӑшпӗр ҫывӑх тусӗсене илсен, вӗсем, кайран паларнӑ тӑрӑх, партине партишӗн усӑ кӳрсе ӗҫлеме мар, ӑна хавшатас тесе тата шалтан сиктерсе аркатас тесе кӗнӗ пулнӑ.

VI-мӗш сйес решенисем пурте пролетариата тата чи чухӑн хресченсене хӗҫпӑшаллӑ восстани тума хатӗрлемели решенисем пулнӑ. VI-мӗш сйес партине хӗҫпӑшаллӑ восстани тума, социалисӑмлӑ револԓуци тума кӑтартса хӑварнӑ.

Партин сйес кӑларнӑ манифесӗ рабочисене, салтаксене, хресченсене буржуазипе татӑклӑн тытӑҫма вӑйсене хатӗрлеме чӗннӗ. Вӑл ҫакӑн пек сӑмахсемпе вӗҫленнӗ:

„Пирӗн кӗрешури йулташсем, ҫӗнӗ ҫапӑҫусене хатӗрленӗр! Ҫирӗппӗн, хӑйулӑн тата лӑпкӑн, провокацисем хыҫҫӑн каймасӑр, вӑйсене пухӑр, кӗрешӳле колоннӑсене тӑрӑр! Пролетарисемпе салтаксем, парти йалавӗ айне! Йалта пусмӑрта пурӑнакансем, пирӗн йалав айне тӑрӑр!"

5. Корнилӑв генерал револԓуцине хирӗҫ загӑвӑр туни. Загӑвӑра ҫӗмӗрсе тӑкни. Петроградпа Мускавра Советсем боԓшевиксем йенне куҫни.

Пӗтӗм влаҫа йарса илнӗ хыҫҫӑн, буржуази вӑйсӑрланса йулнӑ Советсене ҫӗмӗрсе тӑкма тата уҫҫӑнах контрреволԓуцилӗ диктатурӑ тума хатӗрленме пуҫланӑ. Рйабушкинский миллионер намӑса пӗлмесӗр: „выҫлӑхӑн шӑмӑлӑ алли, халӑхӑн ҫуклӑхӗ халӑхӑн суйа тусӗсене—демократилӗ Советсемпе Комитетсене мӑйран йарса илнипе" кӑна хаԓхи пурнӑҫран хӑтӑлса тухма *пулат̆, тесе каланӑ. Фронтра полевой* судсем тата салтаксене персе вӗлермеле тӑвасси асса кайнӑ. 1917 ҫулти августӑн 3-мӗшӗнче главнокомандуйушчи Корнилӑв генерал тылра та персе вӗлермели йӗрке тума хушнӑ.

Августӑн 12-мӗшӗнче Мускавра, Пысӑк Театрта, Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ буржуазипе помещиксен вӑйне мобилизацилеме пухнӑ Государственнӑй совешчани уҫӑлнӑ. Совешчанире, пуринчен ытла, помещиксӗн, буржуази, генералитет, офицерствӑ, казачествӑ представителӗсем пулнӑ. Советсенчен совешчанире меԣшевиксемпе есерсен представителӗсем пулнӑ.

Государственнӑй совешчани уҫӑлнӑ кун Мускавра боԓшевиксем, совешчанине протеслесе, пӗтӗмӗшле забастовкӑ организациленӗ, забастовкӑна рабочисен ытларахӑш пайӗ хутшӑннӑ. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах ытти чылай хуласенче те забастовкӑсем пулса иртнӗ.

Есер Керенский, мухтанса ӳксе, канашлура хӑйӗн сӑмахӗнче: револԓуцилӗ йухӑмӑн кирек мӗнле ӗҫне те, вӑл шутрах—хресченсем помещиксен ҫӗрӗсене хӑйсен ирӗкӗпе туртса илме пӑхнине те *„тимӗрпе те йунпа"* пусарса лартассипе хӑратнӑ.

Контрреволԓуцилӗ генерал Корнилӑв тӳрех „Комитетсемпе Советсене пӗтерме" хушнӑ.

Ставкӑна,—ун чухне *главнокомандуйушчи* штабне ҫапла каланӑ,—Корнилӑв генерал патне, укҫа пама тата пулӑшма пулса банкирсем, купецсем, фабрикантсем нумайӑн пыма пуҫланӑ.

Корнилӑв генерал патне „сойузниксен", урӑхла каласан, Англипе Францин представителӗсем те пынӑ, вӗсем револԓуцине хирӗҫ тухассине васкатма ыйтнӑ.

Ӗҫ—револԓуцине хирӗҫ Корнилӑв генерал загӑвӑр тӑвасси патне пынӑ.

Корнилӑв загӑварӗ уҫҫӑнах хатӗрленнӗ. Тимлӗхе ҫак загӑвӑртан пӑрса йарас шутпа, загӑвӑра хатӗрленекенсем: револԓуци пулни ҫурҫул тултарнӑ кун тӗлне—августӑн 27-мӗш тӗлне—боԓшевиксем Петроградра восстани тума хатӗрленеҫҫӗ, тесе сӑмах кӑларса йанӑ. Керенский пуҫ пулса тӑракан Вӑхӑтлӑх правитӗлствӑ боԓшевиксем ҫине сиксе ӳкнӗ, пролетарилӗ партине хирӗҫ террор вӑйлатнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех Корнилӑв генерал Петроград ҫине *илсе пыма*, Советсене пӗтерсе *хума тата ҫар диктатурин правитӗлствине туса хума ҫарсем пуҫтарса пынӑ.*

Корнилӑв хӑй контрреволԓуцилӗ выступлени тӑвасси ҫинчен малтан Керенскипе калаҫса татӑлнӑ. Анчах Корнилӑв выступлени вӑхӑтӗнче Керенский тепӗр йенне куҫса ӳкнӗ, хӑйӗн сойузникӗнчен пӑрӑннӑ. Керенский ҫакӑнтан хӑранӑ: халӑх массисем, корниловщинӑна хирӗҫ ҫӗкленнӗ тата ӑна ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хыҫҫӑн, унпа пӗрлех Керенскин буржуалӑ правитӗлствине те, вӑл халех корниловщинӑран пӑрӑнмасан, шӑлса ывӑтӗҫҫӗ.

Малалли 3-мӗш страницӑра

МАЛАЛИ.

Августăн 25-мĕшĕнче Корнилăв Петроград ҫине, вăл „тăван ҫĕршыва ҫăлма" шутлать тесе пĕлтерсе, Крымăв генерал командипе пыракан 3-мĕш утлă корпуса яна. Корнилăв восстанине хирĕҫ ответлесе, большевиксен партийĕн Тĕпкомĕ рабочисемпе салтаксене хĕҫпăшалланса контрреволюцине активлăн отпор пама чĕннĕ. Рабочисем хăвăртăн хĕҫпăшалланма та отпор пама хатĕрленме пуҫланă. Красногвардии отрячĕсем ҫак кунсенче темиҫе хут ӳснĕ. Профсоюзсем хăйсен членĕсене мобилизацилеҫĕ. Петроградри революцилĕ ҫар чаҫĕсене те ҫапăҫма хатĕрлесе ҫитернĕ. Петроград тавра окопсем чавнă, пралук картасем тытнă. Петроград патне пыракан ҫулсене ҫӳтнĕ. Кронштадтри хĕҫпăшалланнă темиҫе пин матроссем Петроградa хӳтлеме пынă. Петроград ҫине наступлени тăвакан „тискер дивизине" делегатсем янă, унта вĕсем горец-салтаксене Корнилăв выступленийĕ мĕне пĕлтерни ҫинчен ăнлантарса панă. вăра „тискер дивизи" Петроград ҫине наступлени тума пăрахнă. Агитаторсене Корнилăвăн ытти чаҫĕсене те яннă. Хăрушлăх пулнă пур вырăнсенче те корниловщинăна хирĕҫ кĕрешме ревкомсемпе штабсем туса пына.

Вилес пекех хăраса ӳкнĕ есерла-меньшевикла лидерсем, вăл шутра Керенский те, ҫак кунсенче большевиксен патĕнче пулăшу ыйтрăнă, мĕншĕн тесен, вĕсем Корнилăва ҫĕмĕрсе тăкма пултаракан пĕртен-пĕр хăватлă вăй—большевиксем пулнине курса ĕненнĕ.

Анчах, массăсене корниловщинăна ҫĕмĕрсе тăкма мобилизацилесе, большевиксем Керенский правительствине хирĕҫ кĕрешессине те чарса лартман. Большевиксем массă умĕнче Керенский правительствине, меньшевиксемпе есерсене, хăйсен пĕтĕм политикипе Корниловăн контрреволюцилĕ заговăрне объективлăн пулăшса пынăскерсене, тăрă шыв ҫине кăларса пынă.

Ҫак пĕтĕм ĕҫсене тунине пула корниловщинăна ҫĕмĕрсе тăкнă. Крымăв генерал перĕнсе вилнĕ. Корнилăва ун майлисене—Деникина тата Лукомские арестленĕ (сăмах май каласан, Керенский вĕсене часах ирĕке кăларнă).

Корниловщинăна пĕре ҫапсах ҫĕмĕрсе тăкни революципе контрреволюци вăйĕсен соотношенине уҫса кăтартнă. Вăл ҫакна кăтартнă: пĕтĕм контрреволюцилĕ лагĕр генералсемпе кадетсен партинчен пуҫласа буржуази тыткăнĕнче ҫухалса кайнă меньшевиксемпе есерсем таранах, пурнĕрех пĕтсе пармалă. Вăрҫăна, ăна тума вăй ҫитмест пулин те, малала тăсса пырас политикă тата нумăйа тăсăлнă вăрҫăна пула хуҫалăх йухăнса пыни контрреволюцилĕ лагĕрĕн халăх массисем хушшинчи влиянине татăклăнах ишĕлтерни уҫҫăнах курăнса тăнă.

Корниловщинăна ҫĕмĕрсе тăкни, малала, большевиксен партийĕ ӳссе революцин ĕҫе татса паракан вăйĕ пулса тăнине, контрреволюцин кирек мĕнле хăтланăвĕсене те ҫĕмĕрсе тăкма пултаракан вăй пулнине кăтартса панă. Пирĕн парти унчукне йĕртсе пыракан парти пулман-ха, анчах вăл корниловщинă кунĕсенче чăн-чăн, влаҫа йĕртсе пыракан вăй пек ĕҫленĕ, мĕншĕн тесен, вăл кăтартса панисене рабочисемпе салтаксем пĕр пăркаланмасăр туса пынă.

Йулашкинчен, корниловщинăна ҫĕмĕрсе тăкни вилнĕ пек туйăннă Советсем чĕннипе хăйсенче революцилĕ отпор памали пите пысăк вăйсене тытса тăнине кăтартса панă. Нимĕн иккĕленмелли те пулман, шăпах Советсемпе вĕсен ревкомĕсем Корнилăв ҫарĕсен ҫулне пӳлсе лартнă, вĕсен вăйĕсене хуҫса тăнă.

Корниловщинăна хирĕҫ кĕрешни рабочисемпе салтаксен депутачĕсен хаксăрланса йулнă пулнă Совечĕсене чĕртсе янă, вĕсене соглашательле политикă тыткăнĕнчен хăтарнă, вĕсене революцилĕ кĕрешĕвĕн аслă ҫулĕ ҫине кăларса тăратнă тата вĕсене большевиксен партийĕ йене ҫавăрнă.

Большевиксен влиянийĕ Советсенче нихҫанхи пек мар ӳснĕ.

Большевиксен влиянийĕ ҫавăн пекех йалта та хăвăртăн ӳсме пуҫланă.

Корнилăв восстанийĕ хресченсен анлă массисене ака мĕн кăтартса панă: помещиксене генералсем, большевиксемпе Советсене ҫĕмĕрсе тăкса, кайран хресченсене ҫине сиксе ларассĕ, Ҫавăнпа та чухăн хресченсен анлă массисем большевиксен тавра ытларах та ытларах таччăн пĕтĕҫме пуҫланă. Вăтам хресченсене илес пулсан,—вĕсем пăркаланса тăни революци 1917 ҫулти апрелтен пуҫласа августа ҫитиччен тапхăр хушшинчи аталанăвне чăмантарса пынă, вĕсем вара, Корнилăва ҫĕмĕрсе тăкнă хыҫҫăн, чухăн хресченсен масси ҫумĕ пĕрешсе, пăлăннах большевиксен партийĕ йене ҫавăрăнма пуҫланă. Хресченсен анлă массисем вĕсене большевиксен партийĕ кăна вăрҫăран хăтарма пултарнине, вăл кăна помещиксене ҫĕмĕрсе тата ҫĕрсене хресченсене ҫĕр пама хатĕр тăнине анланса илме пуҫланă. 1917 ҫулти ҫентябĕрпе октябĕрте, хресченсем помещиксен ҫĕрĕсене туртса илессин пысăккăн ӳсет. Пур ҫĕрте те хресченсем хăйсен ирĕкĕпе помещиксен ҫĕрĕсене сухала-сухала пăрахаҫҫĕ. Революци тума ҫĕкленнĕ хресченсене ентĕ ӳкĕтлени те, каратĕльнăй отрядсем те чарма пултараймаҫҫĕ.

Революци ҫĕкленĕвĕ ӳссе пынă.

Советсене чĕртсе йарас тата ҫĕнетес тапхăр, советсене большевизацилес тапхăр ҫарăлса кайнă. Хапрăксем, савăтсем, ҫар чаҫĕсем хăйсен депутачĕсене тепĕр хут суйласа, Советсене меньшевиксемпе есерсем вырăнне большевиксен партийĕн представителĕсене йараҫҫĕ. Корниловщинăна ҫĕнтернĕ хыҫҫăн тепĕр кунне, августăн 31-мĕшĕнче, Петроград Совечĕ большевиксен политикине майлă тăрăт. Петроград Совечĕн кивĕ, меньшевиклаесерла, Чхеидзе пуҫ пулнă президиумĕ оставка тухăт, большевиксем вăльĕн вырăн тасатăт. Ҫентябĕрĕн 5-мĕшĕнче рабочисен депутачĕсен Мускав Совечĕ большевиксен йенне куҫăт. Мускав Совечĕн есерла - меньшевикла президиумĕ те ҫавăн пекех, большевиксене вăльĕн ҫул тасатса, отставка тухăт.

Ҫакă вăл восстание ăнăҫулăн тума кирлĕ тĕп майсем халĕ ентĕ пулса ҫитнине пĕлтернĕ.

Черете ҫĕнĕрен: „Пĕтĕм влаҫ Советсене!" текен лозунг тухса тăнă.

Анчах ку ентĕ влаҫ меньшевикла-есерла Советсен аллине куҫмали кивĕ лозунг пулман. Ҫук,—ку вăл ҫĕршывра пĕтĕм влаҫа большевиксен йертсе пыракан Советсене парас тĕллевпе Советсем Вăхăтлăх правительствăна хирĕҫ восстани тумали лозунг пулнă.

Соглашательле партисем хушшинче пăтрашу пуҫланса кайнă.

Революцилĕ шухăшлă хресченсен хĕснипе, есерсен сулахай ҫунат—„сулахай" есерсем уйăрăлса тухнă, вĕсем буржуазипе килĕшӳ тăвас политикăпа кăмăлсăр пулма пуҫланă.

Меньшевиксен, хăй черечĕпе, „сулахайрисен" группи, „интернационалиссем" теннĕскерсен группи, пулса кайăт, вĕсем большевиксен йенне туртăнма пуҫланă.

Анархиссене илес пулсан, вĕсем вара, хăйсен влиянийĕ ахаль те пĕчĕк группă пулнăскерсем, халĕ ентĕ татăклăнах вакă группăсене саланса пĕтнĕ, вĕсенчен пĕрисем обществăна кайăшсен уголовниккăрăхрала тата провокаторла елементсемпе хутшăса кайнă, теприсем „идейлă" експроприаторсем пулса тăнă, вĕсем хресченсемпе хулари вак хуҫалăхла ҫынсене ҫаратма тытăннă, рабочи клубсен ҫурчĕсене, вĕсен укҫисене туртса илнĕ, виҫҫĕмĕшĕсем хăйсен пурнăҫне буржуази тавралăхне уҫҫăнах йĕркелесе, уҫҫăнах контрреволюционерсен лагĕрне куҫнă. Пурте вĕсем кирек мĕнле влаҫа та хирĕҫ пулнă, вăл шутра уйрăмăнах — рабочисемпе хресченсен революцилĕ влаҫне хирĕҫ пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем революцилĕ влаҫ вĕсене халăха ҫаратма, халăх пурлăхне вăрласа пĕтерме парас ҫуккине пĕлсе тăнă.

Корниловщинăна ҫĕмĕрсе тăкнă хыҫҫăн, меньшевиксемпе есерсем пуҫсе пыракан революцилĕ ҫĕклен ĕвĕ вăйсăрлатма тата тепĕр хут хăтланса пăхнă. Ҫак шутпа вĕсем 1917 ҫулти ҫентябĕрĕн 12-мĕшĕнче социалисла партисен, соглашательле Советсен, профсоюзсен, земствăсен сутуилӳ-промышленнăҫ ушкăнĕсен, ҫар чаҫĕсен представителĕсенчен Пĕтĕм Россйăри демократилĕ совещани пухнă. Совещани Предпарламент (Республикăн вăхăтлăх совечĕ) уйăрса хунă. Соглашательсем Предпарламент пулăшнипе революцие чарса лартма, ҫĕршыва совет революци ҫулĕ ҫинчен буржуалла-конституцилĕ аталану ҫулĕ ҫине, буржуалă парламентаризм ҫулĕ ҫине куҫарма шутланă. Анчах ку вăл банкрута тухнă политиксен революцие урапине кайала ҫавăртарса йама пăхнă шанчăксăр ĕҫ пулнă. Ҫав хăтлану пĕтсе лармала пулнă, вăл чăнах та пĕтсе ларнă. Соглашательсен парламентализма вырăнинчен рабочисем мăшкăлланă. Вĕсем кулăшăн Предпарламента „предбанник" („мунча умĕ") теннĕ.

Большевиксен партийĕн Тĕпкомĕ Предпарламента бойкот тума йышăннă. Чăнах та, большевиксен Предпарламентри фракцийĕ—унта Каменевпа Теодорович йышши етемсем ларнă,—Предпарламентран тухса кайасшăн пулман. Анчах парти Тĕпкомĕ вĕсене Предпарламентран ирĕксĕрех тухтарнă.

Предпарламента хутшăнассипе Каменевпа Зиновьевăн хытă ҫине тăнă, вĕсем ҫак майпа партине восстани хатĕрлес ĕҫ ҫинчен пăрса йарасшăн пулнă. Предпарламента хутшăнассине хирĕҫ большевиксем Пĕтĕм Россйăри демократилĕ совещанин фракци ларăвĕнче Сталин йултăш хытăн тăнă. Вăл Предпарламенто „корниловщинăн хырăм пăрахни" тенĕ.

Ленинпа Сталин Предпарламента кĕске вăхăт хушшинче пысăк йăнăш тесе шутлана, мĕншĕн тесен, унта: Предпарламент чăнах та ĕҫҫыннисемпе вăлĕн те пулин тума пултарать, тесе суйа ĕмĕт сарма пултарнă.

Ҫав вăхăтрах большевиксем ҫине тăрса Советсен II-мĕш сĕсне пухма хатĕрленĕ, унта вĕсем сĕсăн ытларахăшĕ хăйсем майла пуласине шаннă. Меньшевиксемпе есерсем Пĕтĕм Россйăри Тĕпĕстăвкомĕнче ларнă меньшевиксемпе есерсем темĕн пек пăркаланнă пулсан та, большевиксен Советсен хĕссе пынипе, Советсен Пĕтĕм Россйăри II-мĕш сĕсне 1917 ҫулти октябĕрĕн иккĕмĕшĕн ҫуруйĕхсĕне пухмала тунă.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаҫатăн ҫитес номĕрĕсенче пичетленет).

Парти пурнăҫĕ

Служăшчисем хушшинчи политикăлă ĕҫ

Рабочисемпе, хресченсемпе пĕрле совет служăшчийĕсем социализмлă обществăна тунă ҫĕрте активлăн кĕрешеҫҫĕ. Вĕсем—рабочисемпе хресченсен ачисем. Ҫавăнпа та, служăшчисем хушшинче партилĕ-политикăлă ĕҫе куллен вăйлатса пымала, вĕсене марксизм—ленинизм теорине вĕрене алла илме пулăшасси парторганизацисен чысла ĕҫе пулать.

ЧАССР Йустици Халăх Комиссариатĕнче, Верховнăй судра тата Прокуратурăра пурĕ 120 ҫын ĕҫлет. Пуҫламĕш парторганизаци, комсомол организаци вĕсен хушшинчи партилĕ-политикăлă ĕҫе аван йĕркеленĕ. Кашни кун, кăнтăрла, 15 минут хушши политинформацисем пулса иртет. Политинформацисем пуринчен ытларах тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе паллаштарас йенĕпе иртеҫҫĕ. Партком политинформацине иртерме политикăлă ыйтусене тĕплĕн пĕлекен йултăшсене уйăрнă.

Вăхăчĕ-вăхăчĕпе пухусем туса тĕнчери лару-тăру ҫинчен докладсем итлеҫҫĕ. Нумăйăш пулмасĕ вăл ыйтупа Патейĕв йултăш доклад тунă.

Ҫуллахи вăхăтра канмали кунсенче пур служăшчисемпе пĕрле Атăл леш йенне 3 хут кайнă. Унта политикăлă ыйтусемпе докладсем, калаҫусем туса иртернĕ.

Парторганизаци А. Толстой ҫырнă „Хлеб" йатлă произведенине пĕрлешсе вуласа сӳтсе-йавассине организациленĕ. „Очная ставка" пйесăна курма коллективлăн театра кайнă.

Служăшчисем хушшинче хаҫатжурналсем сарма парторганизаци пĕр ҫынна уйăрса хунă. Халăхи вăхăтра Йустици Халăх Комиссариатĕнче ĕҫлекенсем пурĕ 210 екземплйар хаҫат-журналсем ҫырăнса илеҫҫĕ. Хаҫат-журнал сарас тĕлĕшпе Ҫеменăв йултăш тăрăшса ĕҫлет. Чылай служăшчисен хăйсен библиотекисем пур.

Пуҫламĕш парторганизаци служăшчисем хушшинче партилĕ-политикăлă ĕҫсем мĕнле тăни ҫинчен уйрăм агитаторсенчен, профсоюзсен вырăнти комитечĕсенчен тăташах отчот итлет, вĕсене мĕнле ĕҫлемелине кăтартса парăт. Политикăлă-массăлă ĕҫе организацилени май партине илесси те вăйланнă. Кăҫал пуҫламĕш парторганизаци производствăлă тата политикăлă-массăлă ĕҫре активлă ĕҫлекенсенчен 6 ҫынна партине, 3 ҫынна сочувствующине илнĕ.

Партине илнисенчен Чупраков йултăш Йустици Халăх Комиссариатĕнче 1934 ҫултанпа ĕҫлет. Вăл РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра участокри суйлав комиҫҫи ҫекретарĕ пулса ĕҫленĕ. Халăхи вăхăтра агитатăр пулса ĕҫлет, Хусанти йуридически институтра заочнă вĕренет. Хăйĕн ĕҫĕсене вăхăтра туса пырăт.

Гаврилăв йултăша та кăҫал парти членĕн кандидатне илнĕ. Вăл 1925 ҫултанпа комсомол ретĕнче тăрăт. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра Гаврилăв йултăш участокри суйлав комиҫҫин ҫекретарĕнче ĕҫленĕ. Йустици органĕсенче 1922 ҫултанпа ĕҫлет. Вăл малтан делопроизводителĕре ĕҫлеме пуҫланă. Халăхи вăхăтра Чăваш республикинчи прокурорăн аслă помощникĕ пулса ĕҫлет.

Йустици Халăх Комиссариатĕнче комсомол пуҫламĕш организаци те аван ĕҫлесе пырăт. Кăҫал ҫамрăксенчен 8 ҫынна комсомол ретне илнĕ. Парти членĕн кандидатне кĕме 6 комсомолĕҫа, кандидатран члена куҫма 2 комсомолĕҫа рекомендацисем панă.

Пуҫламĕш парторганизаци служăшчисем хушшинчи партилĕ-политикăлă ĕҫе татах та вăйлатмала-ха. Парторганизаци служăшчисене марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕҫпăшаллантармала. Служăшчисем хушшинче ПСК(б)П историн Кĕске курсне харпăрхăй тĕллĕн вĕренессине организацилемеле, мĕншĕн тесен, служăшчисем вăл историне пĕчĕкен вуласа ăнланма пултараҫҫĕ.

Шофĕрсемпе охранниксем хушшинче те партилĕ-политикăлă ĕҫе организацилемеле. Халăхи вăхăтра вĕсем хушшинче парторганизаци начар ĕҫлет.

Коммунисcен уҫă пухăвĕсене ытларах иртерсе, унта партине тăманнисене чĕнмеле. Парторганизаци кăҫал уҫă пуху пĕрре кăна иртернĕ. Ҫавăн пекех комсомол пуҫламĕш организаци те уҫă пухусем пулмаҫҫĕ.

Г. Сахалкин.

Паха сĕнӳсем параҫҫĕ

Комсомолăн Тутаркас райкомĕ пуҫламĕш организаци отчотпа суйлав пухăвĕсене иртерес ĕҫе ҫирĕп план тăрăх пуҫларĕ. Парти райкомĕ комсомол организацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсене иртерме 17 коммунис уйăрса пачĕ тата пуҫламĕш парторганизацисене отчотсемпе суйлавсем иртерес ĕҫре комсомол организацисене пулăшса пыма кăтарту пачĕ.

Районра 30 пуҫламĕш организаципе отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртнĕ, вăл пухусенче 159 комсомолĕҫ тухса калаҫнă. Пухусене критикăпа самокритикăна анлăн сарнипе иртереҫҫĕ. Йапăх ĕҫленĕ комитетсенче комсоргсене ҫивĕччĕн критиклесе, ĕҫлеме пултарайман ҫынсене йертсе пырас ĕҫрен сирсе хăвараҫҫĕ, ҫĕнĕ комитета, комсорга хăйсен пултарулăхне ĕҫре кăтартнă ҫынсене суйлаҫҫĕ.

Хатĕрлев кантурĕнчи тата Кирăв йачĕпе тăракан колхозри комсомол комитечĕсем массăлă-политикăлă ĕҫе йапăхтарса йанă пулнă. Комитет ҫекретарĕсем хăйсем йалтăлĕшĕнчен пăсăлса кайнă. ҫамрăксем хушшинче ĕҫлемен. Отчотпа суйлав пухăвĕсе ҫак комитетсен ĕҫне йапăх, тесе калареҫ. Йуванăвăри „Смычка" колхоз ҫумĕнчи комсомол организаци ҫекретарĕ Тарасăв йултăш та питĕ йапăх ĕҫлесе пынă. Ку организацин 1938 ҫулта комсомол ретне пĕр ҫынна та илмен.

Комсомол комитечĕсемпе комсоргсем аван ĕҫлесе пынă ҫĕрте отчотпа суйлав пухăвĕсем те ăнăҫлă иртеҫҫĕ. Нискассинчи „Ударник" колхоз ҫумĕнчи комсомол комитечĕ тата „1-ая борозда" колхоз ҫумĕнчи комсомол организацинче Ҫеменăв йултăш пуху пуласси ҫинчен комсомолĕҫсене 5 кун малтан пĕлтерсе хунă, пуху пулса иртмели пӳлĕмсене лайăх хатĕрленĕ. Комсомолĕҫсем отчотпа суйлав пухăвне ҫĕр процентпех пынă, пухура пур комсомолĕҫсем те тухса каланă.

Комсомол организацисен отчотпа суйлав пухăвĕсене хăшпĕр парторганизацисем тата уйрăм коммунисем кирлĕ пек хакламаҫҫĕ. Хатĕрлев кантурĕнчи парторг Степанăв йултăш комсомолĕҫсен пухăвне пыман. Федăрăв коммунис „Страж революции" колхозри комсомол организацинче пуху иртермеле пулнă. Комсомол организацине отчотпа суйлава лайăх хатĕрленсе иртерме пулăшас вырăнне, вăл пуху пуҫланас патне ҫитсен унта кайма та пăрахăҫ тунă.

Отчотпа суйлав пухăвĕсенче комсомол райкомĕ йапăх йертсе пынине те палăртаҫҫĕ. Отчотсем пулса иртнĕ 30 организацирен 9-шĕнче ĕҫе начар тесе хак панă. Комсомол райкомĕ пуҫламĕш организацисене мĕнле йертсе пыни ҫакăнтан та аван курăнать. Тухса калакансем комсомол райкомĕ политвĕренӳ ĕҫне, пионерсемпе шкул ачисене коммуниcла воспитани парас ĕҫе ҫителĕксĕр йертсе пынине палăртаҫҫĕ.

Пухусенче комсомол организацисен ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене лайăх палăртаҫҫĕ, малашне мĕнле ĕҫлемелли ҫинчен паха сĕнӳсем парса хăвараҫҫĕ.

Н. Йемелйанăв.

Комсомолăн Тутаркас райкомĕн ҫекретарĕ

Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Маҫтăра тухнă хыҫҫăн

Ҫамрăк чухне Павалăн вĕренме май пулман, вăл йалта кулак патĕнче ĕҫленĕ. Революци хыҫҫăн ҫеҫ Павал чуралăхран хăтăлнă. 1930 ҫулта „Большевик" савăта ĕҫлеме кĕнĕ. Чăн малтанах вутăсем, екстракт туса каларнă хыҫҫăнхи турпассене турттарнă ҫĕрте, кайăрахпа слесарь вĕренсе тухса дежурнăй слесарьта ĕҫленĕ. Ку вăхăтра ăна пысăкрах профессь илме вĕренни кирлĕ пулнă. Вăл савăта килсенех хутла сахал пĕлекенсен шкулне вĕренме ҫӳренĕ. Ку шкултан вĕренсе тухсан техминимум кружокне кĕнĕ. Кунтан вăл лайăх паллăпа вĕренсе тухнă.

Маҫтăрта ĕҫлеме пуҫланăранпа—1935 ҫултанпа Павал хăйĕн хастарлăхне, ĕҫри пултарулăхне чылай хăпартнă. Политикă йенĕпе те, културăпа производствă йенĕсемпе те вăл нумай ӳсрĕ. Халĕ вăл хăй тĕллĕнех ПСК(б) Парти историне, Ленин—Сталин ҫырнă произведенисене вулать, стахановĕҫсен шкулне вĕренме ҫӳрет. Унăн хăйĕн библиотекă пур. Кашни кунах ĕҫрен таврăнсан пĕрер-икшер сехет ларса хăй тĕллĕн вĕренсе пырать. Йăварлăхсем, ăнланман ыйтусем тупăнсан ытти ҫынсенчен ыйтса пĕлет.

Павал Миронăв йертсе пыракан сменăра 54 ҫын ĕҫлеҫҫĕ. Кусем хушшинче Павал пысăк авторитетпа усă курать. Ăна пурте йураtaҫҫĕ. Производствăна канашлусем, уйрăм калаҫусем туса иртерни сменăра ĕҫ дисциплинине чылайах ҫирĕплетрĕ. Ĕҫ вырăнĕсене те тĕрĕс организациленĕ. Кашни рабочи ăмăртса ĕҫлет. Сменăра 46 стахановĕҫ, нормăна тултарайманнисем ҫук. Сменă кашни кунах планна 100—130 процент тултарса ĕҫлет. Уйрăм стахановĕҫсем: рубильщик А. Никонорăв йултăш кашни кунах 25 тоннă вутă ваклас вырăнне 30—40 тонна ваклать, диффузорщичк И. Наумăв, кестнеровщичĕ А. Антонăвă, ножеточ П. Тимофейĕв йултăшсем те ĕҫре лайăх пример кăтартаҫҫĕ.

Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци 21 ҫул тултаракан уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса хăйсен ҫине илнĕ обйазательствăна рабочисем пурте ăнăҫлăн тултараҫҫĕ. Халăхи вăхăтра ăмăрту тата анлăн сарăлса пырать, кашни рабочи уйав тĕлне ҫĕнĕ ҫĕнтерӳ тăвассишĕн кĕрешет.

Парти кандидачĕ Миронăв йултăш йертсе пыракан сменă малашне те малти ретрех пулĕ.

Хар. Лисин.

Пысăк тухăҫлă ĕҫлеҫҫĕ

ҪĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Механизацилĕ вăрманпунктĕнчи стахановĕҫсемпе ударниксем Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса хăйсем ҫине илнĕ обйазательствăна пысăк хавасăхпа пурнăҫа кĕртеҫҫĕ. Хатĕрленĕ йăвăҫсене тийенĕ ҫĕрте ĕҫлекенсем Н. Сорокин йултăш кашни кун нормăна 250—397 процент, И. Малейĕв йултăш 357 процент, А. Пешков йултăш бригади 200—251 процент тултараҫҫĕ.

Ăмăртура трактăрисемпе вăрман турттаракансем тата вăрман касакансем те паха пример кăтартаҫҫĕ. Вăрман турттаракансем: Ф. Лйасин, И. Колбасов, П. Смолкин йултăшсем Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту пуҫланнăранпах нормăна кунсерен 200 — 260 процентшар тултарса ĕҫлеҫҫĕ, вăрман касакансем М. Сироткин, М. Федăрăв йултăшсем куллен нормăна вăтамран шутласан 200—281 процентшар тултараҫҫĕ.

Мыслецри вăрман цехĕнче ĕҫлекен Хатманăв йултăш бригади (бригадăра 5 ҫын) кашни кун 40—50 кубла метр вутă касса хатĕрлет. Октябĕрĕн 27-мĕшĕнче ку бригадă 55 кубла метр йăвăҫ хатĕрлесе 275 тенкĕ ĕҫлесе илнĕ. Вăтамран шутласан вăл кун кашни рабочи 55 тенкĕшер ĕҫлесе илнĕ.

Ăмăрту сарăлнă

ЕЛĔК. Сӳс-кантăр савăтĕнче ĕҫлекенсем хушшинче Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнмани пĕр ҫын та ҫук. Иванова йултăш смени Никитина йултăш сменипе ăмăртать. Савăт туса кăларнă продукци складĕнче ĕҫлекенсем чĕртавар пайĕнчи рабочисемпе ăмăртаҫҫĕ. Ăмăртăва хутшăннă кашни рабочи мала тухассишĕн кĕрешет.

Вăрăм сӳс туса кăларнă ҫĕрте ĕҫлекенсем плана ытлашшипех тултарма пуҫларĕҫ. Пĕр сменăра вăрăм сӳс 665 килограм туса кăлармала пулсан, вĕсем 967 килограм туса кăлараҫҫĕ. Йефимăва йултăш нормăна 144 процент, Ишмейкинă 148 процент таран тултараҫҫĕ. Тыллана сӳсе машинăран илсе тăракансем Петровăпа Лаврентйĕва йултăшсем те лайăх ĕҫлеҫҫĕ.

Кĕске сӳс туса кăларакансем те кайа йулмаҫҫĕ. Сменă хушшинче 939 килограм кăлармала пулсан, вĕсем 1160 килограм ытларах кăлараҫҫĕ. Кунта стахановла ĕҫлекенсем сахал мар. Андрейĕва Иегорăва йултăшсем нормăна йалан 150 процент таран тултараҫҫĕ.

З. Николайĕв.

Строителсен стахановла ĕҫĕ

Шупашкарти ҫĕнĕ стройкăсенчи нумай бригадăсем тата уйрăм рабочисем Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци 21 ҫул тултарнине стахановла ĕҫлесе кĕтсе илеҫҫĕ. Чăвашстройтрестри уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăннă 165 рабочирен 137 рабочи халĕ нормăна иртерсе тултараҫҫĕ.

Советсен ҫуртне тунă ҫĕрте ĕҫлекен Вйаткин йултăш йертсе пыракан бригадă (4 ҫын) нормăна 128 процент тултарать. Ҫавăн пекех Йашин йултăш бригади (9 ҫын) нормăна йалан 124 процент тултарать. Войеводин йултăш йертсе пыракан плотниксен бригади те пысăк тухăҫлăхпа ĕҫлет. Бригадăра 15 плотник. Вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕҫлесе, кашни нормăна тултараҫҫĕ. Ҫакна пула пĕтĕм бригадă та 137 процент парать. Уголовский йултăш бригадинче (9 ҫын) нормăна 150 процентран кайа тултаракансем пачах ҫук. Стахановĕҫсем Катабойникăв тата Ҫеменăв йултăшсем ӳкшер нормăна пулă параҫҫĕ.

Стахановла ĕҫлекенсем ытти стройкăсенче те сахал мар. 24 хваттерлĕ ҫурта тунă ҫĕрте ĕҫлекен Калашникăв йултăш бригадин членĕсем пурте стахановла ĕҫлеҫҫĕ. Нормăна бригадир Калашникăв 127 процент, Крайнов йултăш 131 процент, Лапшин 121 процент тултараҫҫĕ.

Бик.

Пысăк ҫитĕнӳсем

КУСЛАВККА. Аманикри колхоз Октябĕр уйавне пысăк ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илет. Кăҫал ҫанталăк аванах пулман пулин те ку колхоз пĕрчĕлĕ тырăсене гектартан 16,74 центнĕр туса илнĕ. Уйрăммăн илсен ыраш гектартан 18,04 центнĕр, кĕрхи тулă 22,71 центнĕр туса илнĕ. Уйрăм бригадăсенче тухăҫ тата пысăкрах пулнă. Данилăв йултăш бригади (2-мĕш бригадă) пĕр кордлă участокран ыраш пĕр гектартан 32,89 центнĕр туса илнĕ. Калинский йултăшăн бригади (3-мĕш бригадă) кĕрхи тулă гектартан 27 центнĕр, урпа 18,26 центнĕр туса илнĕ.

Ку ҫитĕнӳсем ҫанталăк ҫине шанса ларнипе пулман. Ăна агротехникăна алла ҫавăрса илсе, типĕ ҫанталăкпа кĕрешсе туна.

Аманикри колхозра кĕрхи ҫĕртме сухине сухалассипе йур тытса чарассипе йалана кĕнĕ. Унсăр пуҫне 1937 ҫулта 10431 лав тислĕк, 10624 лав торф, 54,25 центнĕр кайăккăшĕк тислĕкĕ, 103 центнĕр кĕл, 180 центнĕр минераллă имҫамсем тăкнă. Вăрлăхсене суртланă, трийĕр вирĕр кăларнă. Хупăлă тырăсене шăтарса акнă, мулчировани тунă, ҫумкуракăнсене ҫумласа тăнă.

Аманикри колхоз ҫентябĕрĕн 14-мĕш тĕлне государствăна пур тĕллĕн тырăсене те парса татнă, натурплатăна ҫентябĕрĕн 15-мĕш тĕлне парса татнă. Аш-какай кăҫалхине парса татса 1939 ҫулшăн 401 килограм панă. Сĕт-ҫу обйазательствисене пурнăҫа кĕртсе, ирĕккĕн 7 пин литр сутнă. 32 тоннă купăста, 5,8 тоннă помидор панă.

Мраҫка.

Ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илет

Турхан районĕнчи Аслă Чемени урапасем тăвакан мастерской Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци 21 ҫул тултаракан уйава пысăк ҫитĕнӳпе кĕтсе илет. Вăл Октябĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмла ăмăртăва хутшăнса ҫулталăкри производство программине 120 процент тултарчĕ.

Маҫтерскойри стахановĕҫсем Михаил Павлăв нормăна йалан 174 процент таран, Степан Бакин 149 процент таран, Орешкин 137 процент таран тултараҫҫĕ.

Англи парламенчĕн çеççийĕ уçăлнă

ЛОНДĂН, нойаберĕн 1-мĕш. Рейтер агентстви пайан Англи парламĕнчĕн çеççийĕ уçăлни çинчен пĕлтерет. Общинăсен палатин пĕрремĕш ларăвĕнче çар министрне Хор-Белиша çакăн пек ыйту панă: регуљарнăй çарта „Брен" систамлă пулеметсемсĕр çуран çар батаљйонĕсем пур-и? Хор-Белиша çапла ответленĕ: „çар хатĕрĕсем çинчен тĕрĕс тата тĕплĕн пĕлтерни çĕршыв интересĕшĕн мар пулсан та, çапах та, епĕ общинăсен палатин членĕсене кун пирки каласа пама пултаратăп: „Брен" системин пулемечĕсене мĕн вăй çитернĕ таран туса кăларатпăр". Англи халăхĕ çар хĕçпăшалланăвĕ пирки пит лăпкăнах шутламанни çинчен каласси çине куçса, Хор-Белиша: епĕ кун пирки лайăх пĕлсе тăратăп, çапах та „халăх аллинче тивĕçлĕ фактсем пулнă пулсан, вăл çавăн пекех иккĕленсе тăман пулĕччĕ", тенĕ.

Англин оборонă вăй-хăвачĕ пирки панă ыйтусем çине ответлесе, Чемберлен ку ыйту çинчен парламĕнтăн çак çеççинче çитес кунсенчи ларусенчен пĕрипче правительстві тĕплĕн пĕлтерме шухăшлать, тесе каланă.

Унтан Чемберлен общинăсен палатинче пайан сўтсе-йавма çакăн пек сĕнў каларса тăратаť: „парламĕнтăн çеççийĕ правительствă Англипе Итали хушшинче тунă килĕшĕве пурнăçа кĕртме шухăшлаnине саламлать". Правительствă çапла шутлать, тесе каланă малала Чемберлен, мĕнле пулсан та Англипе Итали хушшинчи килĕшĕве хăвăртрах пурнăçа кĕртмеле.

(ТАСС).

Общинăсен палатинчи пренисем

ЛОНДĂН, нойаберĕн 2-мĕш. Ĕнер общинăсен палатинче лейборисла партин лидерĕ Еттли пысăк сăмах тухса каланă. „Епĕ уйрăмах Мўнхĕнри килĕшў хыççăн пулса иртнĕ ĕçсем çинчен чарăнса тăрасшăн,—тенĕ Еттли, — вăл ĕçсем Англипе Франци калама çук пысăк поражени тўсни çеç мар, çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнчери саккун йĕркисене, демократине пăсnине пĕлтереççĕ. Чехословаки государствин çĕнĕ чиккисем Гитлĕр Годесбергран панă меморандумра палăртнинчен те начартарах. Гитлĕр тытса илнĕ территори хăй ыйтнинчен те пысăкрах. Ку йенĕпе Чехословакин ирĕксĕрех кайала чакмала пулчĕ, ăна çавна тума хушрĕç те. Çавăнпа та епĕ çакна ыйтса пĕлесшĕн: „Пĕтĕм тĕнчери комиççинче" Англи представителĕ мĕн тунă-ши? (Лейбориссем алă çупаççĕ). Çапла шутлама пулать, Чехословаки чиккисем çинчен калаçса татăлнă чухне Германи лартнă ыйтусене кăна шута илнĕ пулас".

„Епĕ Чемберлентан çакна ыйтасшăн,— тесе хушнă Еттли,—Англи Чехословакине пама хатĕрленекен гарантисем çине мĕнле пăхать тата çав гарантисене камсем хутшăнаççĕ? Епĕ лорд Уинтертон, хăйĕн полномочине ытлашши пысăклатса, Совет Сойузĕ çине тапăнса çавăн пек сăмах каланăшăн питĕ пăшăрханни çинчен пĕлтеретĕп, çавăнпа пĕрлех епĕ каллех çакна ыйтасшăн: лорд Уинтертон каланă сăмахсем Англи правительстви тытакан шухăша пĕлтереçç-и?" Малала Еттли Англи Лигă наци ĕçне кĕмен обйазательствăсене хăй çине илнине хирĕç калать.

Чехословакине зайом парасси çинчен каласа, Еттли çапла ыйтнă: „Чехословаки никама пăхăнса тăман государствă пулса йуласşине тата вăл Германине пăхăнса тăракан государствă пулас марри çине шанса тăма пултарайатпăр-ши епĕр? Чĕпсене тилĕ тытса çийет пулсан, çав чĕпсене тăрантармашкăн нумай тăкаклани никама та вырнаçусăр йапала пулса тăрать-çке". Малала Еттли çакăн çине ответ пама ыйтать: „Чехословакишĕн, вăл демократин тĕрекĕ пулса тăрассине сыхласа хăварас тата вăл ытти правительствăсен влаçĕн айне ан кĕрсе ўктĕр тесен, епĕр мĕн тума пулаpатпăрха?".

Унтан Еттли „Германи центр тата кăнтăр хĕвелтухăç Йевропăна кĕрсе кайнă хыççăн, Англи суту-илўвĕшĕн мĕн пулса тухасси çинчен правительствă шухăшласа пăхнă-и, тесе ыйту парать.—Инçет Хĕвелтухăçĕнче те çавăн пек ĕçсемех пулса пынине правительствă шута илет-ши; унта Йапони агреççийĕ çĕнтерес пулсан, тĕнчери ытти çĕршывсемшĕн Китай рынăкĕ хупăнса ларать".

Йулашкинчен Еттли демократилĕ çĕршывсене пурне те економикă йенĕпе пĕр шухăшлă пулса ĕçлеме чĕнет тата миршĕн тăракан çĕршывсене економикăллигине пĕрлештерме хушнă, çавăн пек лиги тĕнчери çĕршывсене пурне те пĕрлештерсе ĕçлемеле.

(ТАСС).

Франко генерала вĕлерме хăтланни çинчен Испани хаçачĕ мĕн çырать

БАРСЕЛЮНĂ, октаберĕн 28-мĕш. „Вангуардия" хаçат çапла çырса пĕлтерет: пăлхавçăсен районĕсенче Франко генерала унăн çекретарĕ Коссио вĕлерме хăтланни çинчен сăмах сарăлнă. Вăл сăмахсем тăрăх, вĕлерме хăтланакана хăйне персе пăрахнă. (ТАСС).

ССРС тусĕсен Францири ассоциацин сийесĕ хупăннă

ПАРИЖ, нойаберĕн 2-мĕш. Ĕнер Лион хулинче ССРС тусĕсен Францири ассоциацин сийесĕ хупăннă. Сийес пĕр шухăшлă пулса чылай резољуцисем, уйрăмах ассоциаци членĕсем умне Франципе Совет Сойузĕ пĕр-пĕрне пулăшас йенĕпе тунă догăвăра хўтлес задачăна лартакан пĕтĕмĕшле резољуци йышăннă. Сийесра ассоциацин национаљнăй комитетне çĕнĕрен суйласа хăварнă. Вăл комитета çаксене суйланă: Ромен Роллан, Пйер Кот, Жиромский, Франси Журден, Фернан Грение, Аљбер Байе т. ыт.

(ТАСС).

Чан Кай-ши манифесĕ

ЛОНДĂН, нойаберĕн 2-мĕш. Рейтер агентствин корреспонденчĕ Чунцинран Чан Кай-ши Китай халăхĕ патне манифес кăларни çинчен пĕлтернĕ. Манифесра Китайăн йапоnĕцсене хирĕç тăмали вăйĕ çыран хĕррисенче мар, çĕршывăн шалти районĕсенче тăрать, тенĕ. Чан Кай-ши çапла ăнлантарса панă: Хаљкоуна çавăн пек нумай вăхăт сыхласа тăнин сăлтавĕ тылри çыхăнăва лайăхлатма тата шалти ресурсăсене çирĕплетме вăхăт кирлĕ пулнинче. „Халĕ ĕнтĕ çаксене пĕтĕмпех,— тесе çырать вăл,—пурнăçа кĕртнĕ,—çавăнпа та епĕр уйрăм пунктсемшĕн кĕрешес вырăнне нацилĕ вăрçа анлăшпех сарса пыма пултаратпăр. Китай çарĕ Хаљкоуран чакни çавăн патне илсе пырать, оборонăлă вăрçăран наступлени çине куçма пултарать вăл".

Чан Кай-ши манифесра, вăрçă революцилĕ кĕрешў пулса тăрать, çавăнпа та вăл вăрçă тăшмана йалтах çĕмĕрсе çĕнтермесĕр пĕтме пултараймасть. Ăна тума Китайăн хĕçпăшаллă вăй çителĕклĕ таранах пур, нимĕн те хăрамали çук, Китай халăхĕ çĕнтеретех, тенĕ.

(ТАС).

Çĕнĕ кишлак—Диљкуши

Бухараран 5 километртра Диљкуши йатлă кишлак ларать. Унта ĕлĕк чухăн—декхансем тата куљарсем (Бухара емирĕн чурисем) пурăннă. Йатăнса аннă кивĕ пўртсем кишлака кичем сăн çапнă. Кишлакăн пĕртен-пĕр илемĕ—емир судйин сачĕ пулнă.

1929 çулта Диљкушире колхоз организациленнĕ. Чухăнсем хăйсен колхозне аслă Сталин йатне панă. Иртнĕ çулсем хушшинче кишлак сăн-сăпачĕ палламала мар улшăннă. Çĕнĕрен пысăк та çутă çуртсем, виçĕ чайхана, гараж, столовăй туса лартнă. Кишлака шкул, клуб, универмаг, виçĕ пысăк сад, куљтурăпа кану паркĕ илемлетсе тăраççĕ. Халĕ мунча, кинотеатр тăваççĕ.

Куљтурăлă та пуйан пурăнаççĕ колхозниксем. Малтанлăха шўтласа кăларнă тăрăх, кăçал колхоз 2 мĕлйун тенкĕлĕх тупăш илет. Ĕçкунĕ пуçне 15-шер тенкĕ укçан, 2 пăт виноград, 200—250 пуç арбузсемпе дынљасем параççĕ.

Колхозниксен кил вырăнĕсем те лайăх, пĕрер-икшер ĕне, 10—15 çурăх тытаççĕ. Колхозра патефонсăр кил те çук. Виçĕ çынтан пĕр çынна велосипед тивет. Çуртсене електрофикациленĕ.

Револљуциччен кишлакра хут пĕлекенсем виçĕ çын пулнă: емир лартнă судйа, мулла тата бай. Халљхи вăхăтра хут пĕлекенсен хисепĕ 98 процент. Колхозăн хăйĕн интеллигенци пур. Емир чури пулнă Джурайĕв ывăлĕ Бухара райĕçтăвком председателĕ пулса ĕçлет, Ризайĕв колхозник—райпотребсойуз председателĕ. Кишлакра 10 учитĕл, 3 агроном, 2 ветврач. Вăтам шкулсемпе аслă шкулсенче 20 ача вĕренеççĕ.

(ТАСС).

Нойаберĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкарта „Ленфиљм" студийĕ ўкернĕ „Человек с ружьем" йатлă историлĕ-революцилĕ çĕнĕ, саслă фиљм кăтартма пуçларĕç.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: фиљм çинчи кадр (сылтăмран сулахайала) В. И. Ленин (тава тивĕçлĕ артис М. Штраух), Шадрин (артис Б. Тенин) тата Чибисăв (артис В. Лукин).

(„Пресcклише").

„Человек с ружьем" фиљм екран çинче

Нойаберĕн 1-мĕшĕнче çĕршыври кино-театрсен екранĕсем çине „Человек с ружьем" йатлă çĕнĕ, чаплă фиљм кăларнă. Вăл фиљм Октаберти Социалисăмлă Аслă революцин паттăрла кунĕсем çинчен тата Октаберти восстанин генилĕ руководителĕсем—Ленинпа Сталин çинчен каласа парать.

Çак çĕнĕ фиљма 400 копи туса çĕршывăн пысăк хулисене тата Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн чаçĕсене йанă та ĕнтĕ.

(ТАСС).

Йетĕрнери библиотекăн паха ĕçĕсем

ЙЕТĔРНЕРИ тĕп библиотекă çулсеренех вăйланса пырать. Пайанхи куна библиотекăра 26 пин кĕнеке шутланать. Вулакансен хисепĕ те кунсеренех ўсет. Иртнĕ çул вулакансен хисепĕ 2 пин çын пулнă, пайанхи куна вĕсен 4500 çынна çитнĕ.

Вуламали залра таса та çутă. Кунта кашни кун 40—50 çын пулать.

Библиотекăра ачасем валљи уйрăм пўлĕм пур. Унта Йарадайкинă йулташ ĕçлет. Вăл ачасене йуратать, вĕсене кăмăллăн кĕтсе илет. Кĕнекесене мĕнле пăхса усрамали, унпа мĕнле усă курмали çинчен каласа ăнлантарать. Кăçал вăл ачасемпе 10 хутчен калаçу туса иртернĕ. Йарадайкинă йулташ библиотека кĕнеке вулама çўрекенсен йышне кунран кунах ўстерсе пырать. Пайанхи куна ачасен уйрăмĕнче вулакансен хисепĕ 3692 çынна çитнĕ. Иарадайкинă йулташ 28 пионера „XVII партс"езд" колхозри бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем колхозниксене хаçатжурналсем тата илемлĕ литературă вуласа параççĕ. Ку ĕçре Шчетининă, Анпаринăв пионерсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Библиотекăна кĕнекесем илме Сарйел, Палтай, Мăн Йĕкĕт, Пољанкă, Стрелецки йалсенчи ачасем те çўреççĕ. Библиотекăра ĕçлекенсем комсомолăн 20 çул хушшинчи ĕçĕсене кăтартакан кĕнекесен выставкине организацилерĕç. Ачасен уйрăмĕ çтена хаçачĕ кăларчĕ.

Халĕ библиотекă Октабĕр уйавне хатĕрленет. Кунта çтена хаçачĕ, плакатсемпе лозунгсем çырса хатĕрлеççĕ.

Н. Цветков.

Коммуналлă предприйатисем Октабĕр уйавĕ умĕнхи кунсенче мĕнле ĕçлеççĕ

Шупашкар хула совет президиумĕ октаберĕн 31-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕнче хулари коммуналлă предприйатисен уйав умĕнхи кунсенче мĕнле ĕçлемели çинчен решени йышăннă. Вăл решени тăрăх, парикмахĕрскисем нойаберĕн 4-мĕш, 5-мĕш тата 6-мĕш кунĕсенче ирхине 7 сехетрен пуçласа каçхине 12 сехетчен, нойаберĕн 7-мĕшĕнче ирхине 7 сехетрен пуçласа 10 сехетчен ĕçлеççĕ.

Хулари мунча нойаберĕн 4-мĕшпе 5-мĕшĕнче ирхине 7 сехетрен пуçласа каçхине 12 сехетчен, нойаберĕн 6-мĕшĕнче ирхине 7 сехетрен пуçласа çурçĕр иртни 2 сехетчен ĕçлет.

Хула хушшинче çўрекен автобуссем нойаберĕн 5-мĕш, 6-мĕш тата 7-мĕш кунĕсенче ирхине 8 сехетрен пуçласа çурçĕр иртни пĕр сехетчен çўреççĕ.

Филармони артисĕсем йалсенче

Чăвашсен филармони артисĕсем Вăрнар районĕнчи йалсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем Нурăсра, Кăкшăмра, Çавалкассинче, Кĕçĕн Кипекре тата ытти йалсенче те пулчĕç. Филармони артисĕсен программи икĕ пайран тăрать: пĕрремĕш—фокуссем, иккĕмĕш—цирк номĕрĕсем. Пĕтĕмпе 70 номĕре йахăн.

С. Николайĕв.

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

„Хăймалакасси йалповĕн ирсĕрлĕхĕсем"

Çакăн пек йатлă заметкă çырса, 5 колхозник Ишлей районĕнчи Хăймалакасси йалпо прикашчикĕ Сперанский тавар хакĕсене ўстерсе сутни, дефицитлă тавара йалпо магазинĕнче кăтартмасăрах ирĕккеле хаклă хакпа сутни тата ытти йĕркесĕрлĕхсем çинчен те çырса пĕлтернĕччĕ.

Чăвашсойуз тĕрĕслесе тухнă хыççăн заметкăра çырнисем тĕрĕс пулчĕç. Çак йĕркесĕрлĕхсемшĕн тата растратă тунăшăн Сперанскине ĕçрен кăларнă. Ăна халљ суда парса ответ тыттараççĕ.

„Колхоз пурлăхне çаратать"

Пирĕн редакцине Вăрмар районĕнчи Тупахри колхоз завхозĕ Йаким Павлăв ампартан колхоз тыррине çаратни, улталаса 148 килограм ыраш илни çинчен Александрăв йалкор çырнă заметкă килнĕччĕ.

Çак заметкăна тĕрĕслеме Вăрмар районĕнчи прокурор патне йанă.

Заметкăра çырнисем тĕрĕс пулнă. Иаким Павлăва уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ.

Тĕрĕслес ĕç халĕ те пырать.

„Кам айăпĕпе-ши?"

— Пирĕн „Çĕнĕ çул" колхоз кладовщикĕ Федăр Рошканăв (Тутаркас районĕ) колхоз тыррине салатма тытăннăччĕ. Вăл 1936 çулта колхоз тыррине 32 центнĕр таран тăванĕсене пачĕ, пасара кайса сутрĕ, укçине хăй кăсйине чикрĕ. Çакăншăн епĕр Рошканăва суд умĕнче ответ тыттарма пухара йышăнса хăварнăччĕ. Ĕçе прокурор аллине те патăмăр. Çапах та Рошканăвран çав 32 центнĕр тырра халĕ те шыраса илмен,—тесе Пошкăрти колхозниксем çырса пĕлтернĕччĕ.

Заметкăна тĕрĕслеме Тутаркас районĕнчи прокурор патне йанă. Унтан:

— Заметкăра çырнисем пĕтĕмпех тĕрĕс. Рошканăва УК 116 статйин 1-мĕш пайĕ тăрăх ответ тыттарнă,—тесе пĕлтерчĕç.

„Фермăна çаратакана пулăшакан"

„Йефим Григорйĕв Хĕрлĕ Очăри (Ишлей р.) колхозăн таварлă сысна ферми пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра ревизи комиççи членĕсене ĕçтерес шутпа, колхозăн 2 сысна çўрине вăрттăн сутса йачĕ. Ревизи вăхăтĕнче Й. Григорйĕвăн 11 килограм çу тухман, ун çинчен ревизи комиççин председателĕ Лепйошкин никама та шарламасть",—тесе пĕлтернĕччĕ пире К. йалкор.

Çак заметкăна Ишлей районĕнчи çĕрĕç пайĕ тĕрĕслесе тухса, колхозниксен пухăвĕнче Григорйĕва сысна ферми пуçлăхĕнчен, Лепйошкина ревком председателĕнчен кăларнă, тесе пĕлтерчĕç.

Кĕркунне

Колхоз пахчи, илемлĕ сат пахчи.
Ларать шултра та хĕрлĕ панулмилĕ.
Улмисене татать колхоз каччи,
Телейлĕхпе тулса йантрать йурри ун.

Йалтан кайаççĕ вуникĕ маттур
Хĕрлĕ Çара, хаваслăн кулкалаççĕ.
Лашийĕ хатĕр—кўлнĕ хура тур.
Йал-йышсем телейлĕн уйăралаççĕ.

Колхозниксен кĕрекисем тулли,
Уйаври пек тем тĕрлĕ тутлă çимĕç.
Питсем çинче—кашнин хĕвел кулли,
Хĕпĕртеме кашни халљ епĕр тивĕç.

Г. ХУРЗАЙ.

Çтена хаçачĕсен выставки

Нойаберĕн 1-мĕшĕнче, Канаш—Шупашкар чукунçул строительствă управленинче, стройкăра тухса тăракан çтена хаçачĕсен выставки уçăлнă. Выставкăна бригадăсенче тата участкăсенче тухакан 26 çтена хаçачĕ тăратнă.

Выставкăна кĕрсе куракансене уйрăмăнах çак çтена хаçачĕсем хăйсем çине пăхтараççĕ: 3-мĕш участкăри Мефодйĕв бригадин „Малала", 2-мĕш околоткăри (3-мĕш участкă) бригадăн „Стаханăвĕц" хаçатсем. Иккĕмĕш участкăри „На стройке" хаçат та (редактăр Сперанский йулташ) хăйĕн хитрелĕхпе тата содержанипе хăй çине çаврăнса пăхтарать.

Выставкă нойаберĕн 8-мĕшĕччен пырать. Нойаберĕн 5-мĕшĕнче строительствă управленинче çтена хаçат редактăрĕсен тата активлă корреспондентсен канашлăвĕ пулать.

Ал. Смышљайĕв.

Кĕнеке магазинĕнче

Шупашкарти кĕнекесем сутакан магазин октабĕр уйăхĕнчи сутуилўпе финанс планне 107 процент тултарнă—66 пин тенкĕлĕх тĕрлĕрен кĕнекесем сутнă.

Çулталăк планне нойаберĕн 1-мĕшĕ тĕлне магазин 93 процент тултарнă. Магазин работникĕсем çулталăкри плана нойаберĕн 15-мĕшне пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Инспектăрсен курсĕ

Районсенчи налог инспектăрĕсен квалификацине хăпартма, Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ Шупашкарта виçĕ уйăхлăх курс организациленĕ. Унта пурĕ 22 инспектăр вĕренеççĕ.

Çĕнĕ клубсем

Октабĕр революци уйавĕ тĕлне Йенĕшкассинчи, Çĕнйал Шетмĕри (Трак р-нĕ) тата Абакассинчи (Çĕрпў р-нĕ) чăпта çапакан ертелсенче çĕнĕ клубсем уçăлаççĕ.

Уйав кунĕсенче çĕнĕ клубсенче колхозниксен чаплă пухăвĕсем, постановкăсем пулаççĕ.

Октаберти революцин 21 çулхи уйавĕ йачĕпе уçнă выставкă

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ Октаберти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă йатпа выставкă организациленĕ. Выставкăра большевиксен партийĕ Российă империнчи ĕççыннисене капиталисăм пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн паттăрăн кĕрешнине лайăх кăтартнă. Кунта Ленин, Сталин, партипе правительствăн руководителĕсем: Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Микойан, Калинин, Андрейĕв, Жданăв, Куйбышĕв, Кирăв тата ытти йулташсем Октаберти революци вăхăтĕнче ăçта ĕçленине, революцилĕ кĕрешĕве мĕнле йертсе пынине курма пулать. Рабочисемпе хресченсем большевиксен партийĕ йертсе пынипе капиталиссене, интервентсене хирĕç паттăрăн çапăçни куракансене хавхалантарать. Çавăн пекех выставкăра социалисăм строительствинчи çитĕнўсене йар уççăн кăтартса панă. Выставкăн йулашки пайĕ—Сталинла Конституци ĕçе кĕни.

Кĕскен

* Çак кунсенче Канашра санитарипе гигийенă магазинĕн çуртне туса пĕтерчĕç. Октабĕр уйавĕ тĕлне ăна уçаççĕ.

М. Петров.

* Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче фотокружок организациленĕ. Виçĕ занљати пулса та иртнĕ ĕнтĕ. Кружокра 90 çын.

И. Степанăв.

* Шаккăлти (Шупашкар р.) чăпта ертелĕнче библиотекă уçнă. Унта пĕтĕмпе 200 кĕнекене йахăн. Вулакансен йышĕ кашни кунах ўсет.

И. Васильĕв.

* Çĕнйалти (Турхан р.) „Красный флот" колхоз бригадирĕ Й. Çеменăв йулташ кăçал колхозра нумай ĕçлесе илнипе çĕнĕрен икĕ пўрт лартрĕ.

Л. Косойкин.

* Йанăмри (Тутаркас р.) колхозра çĕнĕ клуб туса лартнă. Октабĕр уйавĕн кунĕсенче çĕнĕ клубра колхозăн шавлă оркестрĕ тата драмкружок постановкăсем парать.

Н. Амурцĕв.

* Канашри Сталин йачĕпе тăракан вăрманпромертелĕ çумĕнче трантассем тумали производствă организациленĕ. Трантассен производствине çавăн пекех Шупашкарти вăрманпромертелĕ çумĕнче те организациленĕ.

Çитес çултан пуçласа ку ĕç республикăра чылай вăйланмала.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Росглавмаслопромăн Чăваш Трестне ĔÇЛЕВ ТАТА СЕБЕСТОЙМĂÇ ТĂРĂХ ĔÇЛЕМЕ

счетовод-економист, ревизор тата кассир

КИРЛĔ.

Ĕçукçи килĕшў тăрăх.

Адрĕс: ул. 2-я Герцена, д. № 32.

УХУТНИКСЕНЕ ПĔЛТЕРЕТПĔР:

кăçалхи нойаберĕн 5-мĕшĕнче „Динамо" магазинĕнче тар сутма пуçлаççĕ.

„ЧĂВАШДИНАМО".

„ЧĂВАШ КОММУНЕ" издательствине АСЛĂ БУХГАЛТĔР васкавлă кирлĕ

Аслă бухгалтĕрĕн ĕçукçи 450 т. пулать.
АДРĔС: Дом печати, III этаж, ком. 18.
2—2

ПУСНĂ СЫСНАСЕНЕ ВĔТМЕ САККУНПА ЧАРНĂ.

Йулташсем! Колхозниксем тата йединоличниксем, колхоз работникĕсем, сысна фермисенче ĕçлекенсем, сысна усракан ытти пур граждăнсем те!

Сысна тирĕ тир-сăран промышлĕнăçĕ валљи хаклă сырйо пулса тăнине асрах тытса тăрăр.

Пуснă тата йермен чирпе чирлесе вилнĕ сыснасемпе сысна çўрисен тирĕсене сўсе государствăн тир пухаканĕсене парăр.

Асрах тытăр, пуснă сыснана вĕтме, вилнĕ сыснана йе ытти вылљăхсене тирне сўмесĕр пытарма саккунпа чарнă (Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1932 ç. 10/V йышăнни).

Вылљăхсене килхушшинче ан пусăр. Вылљăхсене йатарласа тунă вылљăх пусмали вырăнсенче пусăр, çапла тусан есĕр лайăх пахалăхлă тир илеттĕр. Унта сыснана кирлĕ пек лайăх пусаççĕ, тирне лайăх сĕвеççĕ тата консервăлаççĕ.

Сысна тирне темле пулсан та ан типĕтĕр. Хĕлле ан шăнтăр, мĕншĕн тесен тир типĕтсен йе шăнтсан пăсăлать.

Шăннă тата типнĕ тирсене йўнĕ хаклаççĕ, ун пек тирсемпе тир хуçи тир хакне 10 процентран 60 процент таран çухатать, тир лайăх пахалăхлă пулсан вăл хака илнĕ пулĕччĕ.

Вылљăх тирне сўсен ăна пĕр тăхтамасăрах „Сойуззаготкожăн" йе йалпон тир пухаканĕсене парăр.

Урăхла май килменнипе сыснана килте пусмала пулсан, тирне пит асăрханса сĕвĕр, касни тата шăтарни ан пултăр.

Сўсен сивĕннĕ сысна тирне шăртне айалала туса таса урайне йе айала мĕн те пулин сарнă вырăна сарса хурса, таса типĕ тăварпа сапăр.

Тăварне тир тайнă виçерен пĕрре виççĕмĕш пайне илĕр. Пĕр-икĕ кун иртсен тире шăртне тулала туса пакет пек хутласа, ăна тир илекене париччен таса вырăнта усрăр.

„Сойуззаготкожăн" райкантурĕсем, пасарти ларйокĕсем, вылљăх пусмали вырăнĕсем, йалсем тăрăх çўрекен агĕнчĕсем тата йалпосем вылљăх тирĕсене кăтартса панă хакпа илеççĕ.

Кашни тиршĕн кăтартнă хакпа укçине тўлеççĕ тата вĕсемшĕн государствă нормисемпе хакĕсем тăрăх тир-сăран таварĕсем, — подошсĕм, подметкăсем, набойкăсем сутаççĕ. Тир илекенсенчен хаксен прейскурантне тата тир пани çинчен квитанци ыйтăр.

„Сойуззаготкожăн" Чăваш кăнтурĕ.

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" СЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 Т. 50 П. 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П. 6 УЙĂХА 15 Т. СУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКĂНА СЫХАНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 560 Гор. Чебоксары, типография № 1 Мест прома ЧАССР, заказ № 832, ф. 6. 58 ✕ 84 п. е.